Китай халăхĕ Йапони захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕре Китай хĕрарăмĕсем активлăн хутшăнаççĕ.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай çарĕн аманнă боецĕсем валђђи çамрăк хĕрсем парнесем илсе пыраççĕ.
(„Пресклише“).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Октăберĕн 26-мĕшĕнче Китай çарĕсем Ухањрен (Центр Китайра) тухса кайнă, тухса кайас умĕн çар обйекчĕсене пурне те тĕппипех пĕтерсе хăварнă. Йапони концеççине çунтарса йанă. Çитĕнсе çитнĕ арçынсем пурте çарпа пĕрле оборонăн çĕнĕ линийĕ çине куçнă. Китай çарĕсем малтанах хатĕрлесе хунă çĕнĕ позицисем çинче çирепленсе тăнă.

Ухањри виçĕ хула—Хањкоу, Хањйан тата Учан—йалтах çунаççĕ. Йапонĕцсен тылĕнче Китай çарĕн отрйачĕсемпе партизансем çапăçусем сарса йанă.

Йанцзы йуханшывĕн çурçĕр йенчи çыранĕ çинче йапонĕцсем Деањ хули патĕнче малала куçма хăтланса пăхнă. Йапонĕцсем вĕлерекен газсемпе усă курнă пулсан та, китайĕцсем хулан ишелсе пĕтнĕ стенисем патĕнче алвĕççĕн штыксемпех çапăçнă хыççăн, йапонĕцсене кайала хăваласа йанă, вĕсене пысăк тăкаксем кӳнĕ.

Çурçĕр Китайра çапăçусем вăйланна. Чылай пунктсенче китайĕцсем наступлени пуçласа, чылай хуласене йапонĕцсенчен туртса илнĕ, хањхи вăхăтра Чахар провинцинчи паха центра—Калгана туртса илессипе хăратаççĕ. Партизансен пĕр отрйачĕ Çуањхуа йатлă пысăк хула çине наступлени туса пырать.

Хенањăн çурçĕр йенчи пайĕнче Китай çарĕсем Цзийуањ хулине çĕнĕрен туртса илнĕ.

Шањси центрĕнче партизансен пысăк отрйачĕ хăйулăн кĕрешет. Вăл отрйада арсеналри тата çĕркăмрăк шахтисенчи рабочисенчен организациленĕ. Кантăр Шањсире пулса пыракан çапăçусенче партизансем йапонĕцсене пысăк тăкаксем кӳреççĕ. Йулашки кунсенче вăл районран Йапонин аманнă салтакĕсене 1.400 çын кăларса йанă.

* * *

Йапони самолђочĕсем Китайăн халăх пурăнакан пункчĕсем çине тискеррĕн бомбăсем пăрахса çӳреççĕ. Санхуа хулинче (Гуанси провинцинче) йапонĕцсем вăтам шкул çине темиçе бомбă пăрахнă. Йапонĕцсем Хунањре Чжучжоу çине вут хыптарса йаракан бомбăсем пăрахнă. Вилнисемпе аманнисем темиçе çĕр çын шутланаççĕ. Хулара пушар сиксе тухнă.

(ТАСС).

Чехословакири государствă средствисене перекетлес йенĕпе ĕçлекен парламент комиççийĕ йышăннă решенисем

ПРАГА, октăберĕн 28-мĕш. Государствă средствисене перекетлес тĕлĕшпе ĕçлекен Берон председателĕ пулса йертсе пыракан парламент комиççийĕ терлĕ решенисем йышăнна. Комиççи правительствăна çаксене тума хушнă: 1. Качча тухнă хĕрарăмсене халĕх пур ĕçрен те кăлармала (государства ĕçĕсенчен кăна мар, уйрăм çынсем патĕнчен те); 2. Государствă аппаратĕнче малтан ĕçленĕ служащисене пенçи парассине чакармала; 3. Пенçионерсене пур категори тăрăх та чи сахал пенçи памалине палăртса хумала; 4. Государствă служащисемпе пенçионерсене совместительствă йеркипе ĕçленине чарса лартмала; 5. „Пражске новины“, „Прагер абендблат“ хаçатсене хупса лартмала тата пичетĕн ытти çавăн пек официађнай органĕсене (кунта „Прагер прессе“ хаçат пирки самах пырать пулмала, вăл хаçат нумай çулсем хушши Бенешĕн—Крофтăн тулашри политики майлă пулса ĕçленĕ, çавăнпа та йулашки вăхăтра вăл хаçат çине тапăнса пыма тытăнна) реорганизацилеме тытăнмала.

(ТАСС).

Германин Америкăри шпионла центрĕн ĕçĕ пирки пухнă следстви материалĕсене вăрланă

НЬЙУ-ЙОРК, октăберĕн 27-ш. Прокурор Гарди пичет представителĕсене çапла пĕлтернĕ: „Германин Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штачĕсенчи шпионла центрĕн ĕçĕ пирки пухнă материалсем шутĕнчен ĕнер пит кирлĕ документсем вăрланă. Вăл документсем — çав шпионла центрăн преступленилĕ ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларакан материалсем. Вăрланă документсем хушшинче—айапланакан Румрих Джесси Джордан шпионка патне йанă сакăр çырун фотокопийĕсем. (Джордан шпионка хањ Шотландире тĕрмере ларать). Вăл документсене Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене Англи влаçĕсем йатарласах йарса панă пулна.

Çухална документсене шыраса тупас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем тума пуçланă.

Амстердамри шахмăт турнирĕ

Нойабĕрĕн 5-мĕшĕнче Голланди столицинче Амстердамра пĕтĕм тĕнчери шахмăт матчĕ—тĕнчери чи вăйлă 8 шахматис турнирĕ уçăлать. Турнирта выљакансем çаксем пулаççĕ: тĕнче чемпионĕ Аљохин, тĕнче чемпионĕсем пулнă Капабланкă тата Ейве, совет гроссмейстерĕ-орденоносец Ботвинник, Америкă гроссмейстерĕсем Ржешевский тата Файн, Чехословаки гроссмейстерĕ Флор тата турнирти чи çамрăк шахматис, Естони гроссмейстерĕ 22 çулхи Керес.

Турнир результачĕсем Аљохинпа пулмали матчра выљамали кандидат кам пулмалине палăртса парĕç. (Çак турнирта мала тухнă шахматисăн 1939 çулта тĕнче чемпионĕ йатне илес шутпа Аљохинпа выљамала пулать).

Пурте пĕлеççĕ, Аљохин тĕнче чемпионĕн йатне 1927 çулта илнĕ, вăл ун чухне Капабланкăна çĕнтернĕ. Унтан, 1935 çулта Ейве кĕтмен çĕртенех Аљохина çĕнтернĕ. 1937 çулта Аљохин Ейвене çĕнтерсе, каллех тĕнче чемпионĕ йатне выљаса илнĕ.

Турнирта пулакан шахматиссем пĕрремĕш турне Амстердамра выљаççĕ. Унтан вĕсем Голландири чи пысăк хуласенче пулаççĕ, вăл хуласенче те пĕрер тур выљаççĕ.

Октăберĕн 27-мĕшĕнче ССРС гроссмейстерĕ Ботвинник йулташ Амстердама пырса çитнĕ.

(ТАСС).

Докладчиксем кайнă

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕ, Октăбĕр уйавне хатерленнĕ май нойабĕрĕн 1-мĕшчен хулари хапрăк-савăтсенчи рабочисемпе служащисем, суту-илӳ работникĕсем, халăх сывлăхне упрас тĕлĕшпе ĕçлекен работниксем хушшинче тĕнчери лару-тару çинчен ăнлантарса пама 21 докладчик уйăрнă. Хула комитечĕ октăберĕн 26-че докладчиксене пухса инструктивлă канашлу туса ирттерчĕ. Çавнашкалах Октăбĕр уйавĕн кунĕсенче Шупашкар хула комитечĕ парти активне хушшинчен хапрăк-савăтсене докладчиксем йарать.

Вл. Игнатйев.

Кинобазă çинчен

Çак кунсенче Уйкас Асламас йаленче Иетĕрнери кинобазăран килсе „Юность“ йатлă 7 пайлă картинă кăтартрĕç. Кино курма халăх питĕ нумай пуçтарăнчĕç. Анчах вĕсем кинокартинă йĕркелĕн кураймарĕç, мĕншĕн тесĕн лентă мĕн пĕтичченех татăлса пычĕ. Кино курма пынисем нимĕн ăнланса илеймесĕрех саланчĕç.

Йетĕрнери кинобазă йенчен çакăн пек ĕçсем час-часах пулаççĕ, анчах вăл хăйĕн ĕçĕн пахалăхне лайăхлатма тăрăшмасть. Çакăншăн колхозниксем тарăхаççĕ.

М. Павлăв.

Профсойузсен активĕн республикăри канашлăвĕнчен

Октăберĕн 27—28-мĕшĕсенче профсойуз активĕн Чăваш республикĕнчи канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕн ĕçĕсем çинчен Чуриновский йулташ тунă доклада итлесе сӳтсе-йаврĕ.

Канашлун икĕ кун хушшинчи ĕçĕсем мĕн кăтартрĕç? Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VI-мĕш пленумĕн историлĕ решенийĕсене пурнăçа кĕртсе Чăваш республикĕнчи профсойузсем хăйсен ĕçĕсене чылай лайăхлатнă. Йертсе пыракан профоргансем профсойуз членĕсен йышлă массипе çыхăну тытассине вăйлатнă, руководствăна çĕнĕ çынсене—Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшакан йулташсене лартнă. Профорганизацисен доброволец-активиссем пиншер çын пур. Çавăн пекех профсойуз организацисем социађни страховани, ĕçе сыхлас, профсойуз членĕсен кулђтурăпа йăла ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртес ĕççене аванлатса пыраççĕ. Çакă ĕнтĕ профсойуз организацисенчи хăйне майлă кризиса пĕтерес ĕç малала пынине лайăх кăтартать.

Анчах Чăваш республикĕнчи профсойуз организацийĕсем Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VI-мĕш пленумĕ кăтартса хăварнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр кĕрешеççĕ-ха. Çакна канашлура пулнă йулташсем тухса калана сăмахсенчен лайăх курма пулать. Канашлура 35 çын тухса каларĕç. Вĕсем профсойуз организацисенчи, чи малтан, йертсе пыракан профорганĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене хытă критиклерĕç.

— Профоргансем профсойуз членĕсемпе çыхăну тытассине йĕркелесе çитерчĕç-и, вĕсем массăран уйăрăлса тăрассине пĕтерчĕç-и?—тесе ыйтать Плетнева йулташ (Улатăр р.). Çук, пĕтермен. Медсантруд работникĕсен сойузĕн Чăваш обкомĕ (председателĕ Çтепанăв йулташ) вырăнсенче çителĕксĕр йертсе пырать. Епĕр, вырăнсенче ĕçлекенсем, обком представителĕсене курманни çулталăк иртнĕ,—тет вăл.

Зубровă йулташ (Çĕмĕрле р.) обком представителĕсем 1937 çултанпа Çĕмĕрлене пыманни, обком вырăнсенчи ĕççене сводкăсем тăрăх çеç пĕлни çинчен калать. Андрейĕв (Йĕпреç р.), Маркизăв (Улатăр р.), Синицын (Канаш р.), Устинăв (Куславкка р.) йулташсем йертсе пыракан профоргансем членсен анлă массипе тачă çыхăну тытас, вĕсен ыйтăвĕсемпе нушисене пĕлсе тăрса, çын çине сталинла пăхас тĕлĕшпе ĕçсем çителĕксĕр пынине кăтартса пачĕç.

Профсойуз ĕçне доброволец-активиссем пиншер çын хутшăннă. Завкомсенче, месткомсенче çĕнĕ кадрсем ĕçлеççĕ. Анчах вĕсене ĕçлеме вĕрентесси, бољшевикла воспитани парасси чылай сойузсенче çителĕксĕр пырать.

— Канаш районĕнче,—тет Синицын йулташ,—профорганизацине парти йенчен йертсе пыни çук. Кунта сойузсен райком, местком членĕсене вĕрентессине аса та илмеççĕ. Епĕр хамăр мĕнле шутлатпăр, çапла ĕçлетпĕр. Çакăн пекех Çĕмĕрле, Куславкка, Çĕрпӳ районĕсенче те профактива вĕрентессине, çĕнĕ кадрсене бољшевикла воспитани парассине организацилемен.

Канашлура тухса каланă йулташсем профсойуз организацисем рабочисемпе служащисен кулђтурăпа йăла ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çине тăрса кĕрешменнине кăтартрĕç.

Канашра, Улатăрта, Шупашкарта тата ытти хуласемпе йалсенче ĕççыннисене чи кирлĕ йапаласем: спичкă, супăњ, тăвар, сахăр, краççин çукки профсойуз организацисем суту-илӳ организацисен ĕçĕсене массăлă контрољ тăвассине манăçа хăварни çинчен калать. Çавăнпа та Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ профсойузсен магазинсен, лавкасен, столовăйсен, буфетсен ĕçĕсене çирĕп контрољ тумала тесе йышăнни пĕчĕк ĕç мар, вăл политикăлă кăтарту, çыншăн сталинла тăрăшма хушакан документ.

Куславкка комбинатĕнчи завком председателĕ Çтепанăвă йулташ профсойуз организацисен халăх тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандăсене пĕр чун хăвармичченех, вĕсен сăтăрлă ĕçĕсене пĕтерес тĕлĕшпе кĕрешес ыйтăва çивĕччĕн лартрĕ. Вăл Куславкка комбиначĕ хăйне туса хута йанăран вăрах, пĕрре те промфинплана тултарманни, комбинатра сăтăрлă ĕççен йулашкисене пĕтерессишĕн бољшевикла кĕрешӳ çуккине, çак кĕрешĕве пуçарма комбинат директăрĕ тата Мускавра, Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариатĕнче ларакан Нахамсон чăрмантарса пынине палăртать. Ытти предприйатисенче те, суту-илӳ организацисенче те сăтăрлă ĕççен йулашкисене пĕтерессишĕн татăклă кĕрешӳ пуçламала, ку ĕçре профсойузсен малти ретре пулмала, терĕç тухса калакан йулташсем.

Смирнов (Шупашкар хули), Воронцов (Çĕмĕрле р.), Йершов (Шупашкар хули) тата ытти йулташсем те профсойуз ченĕсем хушшинче кулђтурăлă-массăлă, оборонă, хутпĕлменлĕхе пĕтерес, вырăнти контрољ ĕçне вăйлатас ĕççем çинчен каларĕç.

Тухса калакан йулташсем пурте тенĕ пекех профактивăн бољшевисăма—ПСК(б)П историне тĕплĕн вĕренме кирлине, профсойуз членĕсен сарлака массисене бољшевисăма вĕренсе алла илсе революцилĕ сыхăлăха хăпартма пулăшмалине хыттăн палăртрĕç.

Канашлура парти Обкомĕн секретарĕ Новикăв, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Сомăв йулташсем тухса каларĕç. Вĕсем Чăваш республикĕнчи профсойузсем умĕнче тăракан конкретлă задачăсем çинче чарăнса тăчĕç.

Сталин, Шверник йулташсем патне саламлă телеграммăсем йанă, докладчикăн йулашки сăмахне итлесе резољуци йышăннă хыççăн, октăберĕн 28-мĕшĕнче çĕрле канашлу хупăнчĕ.

Таварçавăрнăш планне ытлашшипех тултараççĕ

Шупашкарти магазинсенче ĕçлекенсем хушшинче Октăбĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

Çимĕççемпе сутă тăвакан 9-мĕш №-лĕ магазин аван ĕçлет. Магазин пуçлăхĕ—продавец Филатăв тата продавщица Лашманăвă йулташсем виççĕмĕш кварталти таварçавăрнăш планне 138,1 процент тултарнă. Çентăбĕр уйăхĕнче магазин 52 пин тенкĕлĕх тавар сутнă, план 35 пин тенкĕлĕх.

Çавăн пекех 14-мĕш №-лĕ ларйок пуçлăхĕ Александрăвă йулташ та суту-илӳ ĕçне паха йĕркеленĕ. Виççĕмĕш кварталта унăн 60 пин тенкĕлĕх тавар сутмала пулнă пулсан, вăл 72 пин тенкĕлĕх сутнă. Çентăбĕр уйăхĕнче план тăрăх унăн 20 пин тенкĕлĕх сутмала пулнă, вăл 26.700 тенкĕлĕх сутнă.

Хуçалăх таварĕсемпе суту-илӳ тăвакан магазин та таварçавăрнăш планне йаланах тултарса пырать. Виççĕмĕш кварталта 300 пин тенкĕлĕх тавар сутмала пулнă, 374.400 тенкĕлĕх сутнă. Магазин пуçлăхĕ—Илйин, продавецсем—Черепухин тата Николайĕв тавар илекенсене лайăх пăхас тата таварçавăрнăш планне ăнăçлăн тултарас тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Çавăн пекех 19-мĕш №-лĕ ларйок пуçлăхĕ Ваçилйĕв тата 45-мĕш №-лĕ ларйок пуçлăхĕ Токарĕв йулташсем лайăх ĕçлекен стахановĕцсен ретĕнче тăраççĕ. Шупашкарти торг çистеминче ĕçлекен продавецсем суту-илӳ ĕçĕнче вĕсен примерĕпе уса кураççĕ, Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва вăйлатаççĕ.

И. Бољшаков.

Суту-илӳ хыпарĕсем

** Октăберĕн 20-мĕшпе нойабĕрĕн 5-мĕшĕ хушшинче Чăвашсойуз йалпосене пусма таварсем, тутăрсем, ботинкăсем, çĕвĕ машинĕсем, велосипедсем пурĕ 1200 пин тенкĕлĕх йарса парать.

Октăбĕр уйавĕ умĕн пулакан Шупашкарти йармăркăра Шупашкар торгĕ 600 пин тенкĕлĕх хуçалăх тата çимĕç таварĕсем сутать.

** Чăвашсойуз потребкооперацинче ĕçлеме кăçал тĕрлĕ курссем урлă 165 çын вĕрентсе хатĕрлерĕ. Вăл хисепрен райсойузсен инспекторĕсем—24, йалпо председателĕсем—54.

Халĕ Чăвашсойуз йатарласа уçнă курсра потребкооперации çистеминче ĕçлеме бухгалтĕрсем, счетоводсем 97 çын вĕрентсе хатĕрлет.

Йалпо работникĕсем 193 çын техминимум панă.

** Нойабĕрĕн 1-мĕш тĕлне Чăвашсойузăн çĕнĕ çуртне куçаççĕ. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх вăл çуртăн айалти хутĕнче Шупашкар торгĕн ресторанĕ пулмала. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш хучĕсенче Чăвашсойузăн тĕп кантурĕ вырнаçать.

Ку çурта тума пĕтĕмпе 670 пин тенкĕ хывнă.

ЙĂЛА ЫЙТĂВĔСЕМ

Мунчи—мунчах та...

Петĕр мучин Шупашкарта вĕренекен ывăлĕсем çулла киле килчĕç те, çынсене Шупашкарти мунча çинчен каласа тĕлĕнтерчĕç.

— Питех те паха мунча. Шывĕ—вĕри шыв та, сивви те темĕн чухлех. Ашшийĕ вара, темиçе çĕр çын çапăнсан та пĕтмест...

Ывăлĕсене итлесе Петĕр мучи пĕрре кăна мар:

— Мĕнле пырса кĕрес ку мунчана. Те йатарласах кайас, те мĕнле те пулин сăлтав тупса кайас,—тенĕ.

— Йатарласа мар та, анчах Шупашкара пырсан-тусан, çав тери чаплă мунчана çитсе кĕме кирлех,—тенĕ ывăлĕсем ашшĕне, колхоз мунчисĕр пуçне урăх мунчана кĕрсе курман старике.

* * *

Петĕр мучин ĕмĕчĕ çитрĕ çитрех. Уй ĕçĕсене пĕтерсен, авăнсем çапсан, сарă кĕркуннен пĕр кунĕнче Петĕр ывăлĕсем патне хăнана килчĕ. Шупашкар хулине лайăх курса çӳрерĕ. Кинора, Пичет çуртĕнче пулчĕ. Йулашкинчен, мунчана çитсе курас, кĕрсе çăвăнас, çапăнас, терĕ.

Петĕр тĕлĕнсех кайрĕ. Мунча çинчен йерипен те ретлĕн çак сăмахсене каласа пачĕ.

— Мунчи — мунчах... Калама çук аван мунча мĕн. Анчах вăл хуçасăр çурт йеверлĕ. Виçĕ кун хушшинче аран-аран кĕрсе тухрăм. Канмали кун карăм—халăх тулл йĕх. Тăтăмăр, тăтăмăр—вĕри шыв çук, терĕç. Унтан тăрсан-тăрсан, сивĕ шыв çук, терĕç. Йулашкинчен, çутă сӳнсе ларчĕ. Тĕттĕм çĕрте тĕркĕшрĕмĕр-тĕркĕшрĕмĕр те кайала тухса кайрăмăр...

Петĕр мучи тепĕр кунне те мунчана кайнă мĕн, анчах мунчи канмали кунхи пекех ĕçленĕ. Унтан тепĕр кунхине мунчан хăйĕн канмали кун пулнă.

Унтан Петĕр мучи черетре икĕ сехет тăрса мунчана кĕнĕ-кĕнех.

— Атсемĕрсем,—терĕ вăл вара,—сирĕн мунчара йĕрке сахал. Тасалăх çук. Хывăнна çĕрте пы[…] чăк. Çăвăнна çĕрте пушшех […] Унта мĕн кăна çук: хут та[…] сем, милĕк çулçисем, ça[…] курăс татăкĕсем... Шыв йу[…] мали шăтăксем питĕренсе […] та—лапăрчăк шыв кӳленсе […] Çапăнна çĕре кĕретĕн те […] тӳрех сивĕ çапать. Мĕнш[…] çав терийех сивĕ? Лапка паратăн—унта сывлама ç[…] шăршă. Таса мар шыв кӳ[…] рать. Кивĕ милĕксем ку[…] йăванса выртаççĕ. Мунч[…] кенсем вĕсене илсе пăрах[…] ламаççĕ пулмала.

Çаксем çинчен колхоз ст[…] мунчара ĕçлекенсене те кала[…] пăхнă. Ăна хирĕç вĕсем:

— Виш, есĕ йепле çын! Хăна кура мар...—тенĕ.

— Мĕнлĕ апла?—пӳлнĕ мучи.

— Вăл пирĕн ĕç мар. Есĕ каланисене техник çеç тума пултарать,—тенĕ те виççĕн-тăваттăн пĕр харăс кулнă мунчара ĕçлекенсем.

Шупашкарти мунчара епĕ т[…] пулман мар. Петĕр мучи тĕрĕ[…] калать. Мунчине, паллах, хурлам[…] çук. Анчах унта ĕçлекенсем пи[…] ки калани, пирĕн шутпа та тĕ[…] сех. Мĕншĕн тесен, вĕсем тас[…] лăхшăн, кулђтурăшăн тăрăшмаçç[…]

Мунчара йĕркелĕх те çук, йа[…] ланах черет. Ку вăл, ыттисемс[…] пуçне хула çитĕнсе пынинчен т[…] килет ĕнтĕ. Хули вăл малашн[…] те çитĕнмелех—çавăн пек вĕт пирĕн пуласлăх, ыранхи Шупашкар. Çавăнпа та, тепĕр мунча лартасси çинчен шухăшласа пăхма вăхăт мар-ши? Вăхăт! Анчах хањ пур мунчана йĕркелĕ ĕçлеттерме тата ытларах вăхăт.

В. Мусс.

КĔСКЕН

* Çĕрпӳ районĕнчи йалпосенче ĕçлекен прикашчиксен пĕр уйăхлăх курсĕнчен 24 прикашчик вĕренсе тухнă. Халĕ вĕсем йалсене ĕçлеме саланчĕç.

Н. Окунĕв.

* Вăрнар районĕнчи „Трактăр“ колхозра пăспа ĕçлекен армана ĕçе йанă. Пăс машини çумне йĕтĕн тылламали машинă вырнаçтарса лартнă.

Н. Ваçилйĕв.

* Йанмурзинă (Трак р.) колхозĕнчи осоавиахимăвĕцсем „Ворошиловский стрелок“ значок нормисене парас тĕлĕшпе хытă тăрăшаççĕ. Пайанхи куна 15 осоавиахимăвĕц ВС значокĕсем илчĕç,

А. Киçељов.

* Сапайкасси йалĕнчи (Ишлей р.) „Труд“ колхозра акушер пункчĕ уçнă. Унта ĕçлекен Матвейĕвă йулташ хăйĕн ĕçне лайăх туса пырать, колхозниксем ăна йураççĕ.

П. Иванов.

* Хыркассинчи (Çĕрпӳ р.) „Кулђмет“ колхозра çăм тапакан машинă лартнă. Вăл шывпа ĕçлет. Çăм тапакан машинă пĕр уйăхра колхоза 2400 тенкĕ тупăш панă.

А. Иванов.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çуртĕнче

ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕрентĕвĕн çурчĕ Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнă йатпа выставкă организациленĕ.

Выставкă пайан, октăберĕн 30-мĕшĕнче уçăлать, кашни кулленех кăнтăрла иртсен 3 сехетрен пуçласа 10 сехетчен уçă пулать.

Хроникă

Чăваш АССР Халăх Комиссар[…] сен Совечĕ Прокопий Йегоръв[…] Александрăв йулташа Чăваш АСС[…] Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ç[…] мĕнчи Радиокомитет председате[…] не лартнă.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ

Гидроузелăн Шупашкарти çурçĕр-хĕвеланăç отделенийе

ОПЫТЛĂ ДЕЛОПРОИЗВОДИТĔЛ васкавлă кирлĕ.

Пымалли адрĕс: Кадыков урамĕ, 6/2, кадрсен инспекторĕ патне.

„ЗАГОТЗЕРНО“ Шупашкарти хатĕрлев пунктне БУХГАЛТĔРСЕМ ТАТА КАРТОТЕТЧИЦĂ КИРЛĔ.

Адрĕс: Нагорная улица, Одностороннка пункт „Заготзерно“.

3—3

Шупашкарти кăлбаса производствине кăлбаса тăвакан ĂСТА МАÇТĂРСЕМ КИРЛĔ.

Адрĕс: Коммунальная слобода, д. 24.

Канашри финанспа економикă техникумне ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЕ ВĔРЕНТМЕ преподавателĕ кирлĕ

ХВАТЕР ПУР.

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Ыйтмалли адрĕс: г. Канаш, финтехникум. ДИРЕКЦИ.

Шупашкарти „Кооператор“ ертела производствăлă бухгалтерине пĕлекен АСЛĂ БУХГАЛТĔР васкавлă кирлĕ.

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх, хватер параççĕ.

ПРАВЛЕНИ.

2—1

ЧЕБТОРГĂН 1-мĕш №-лĕ ПРОДМАГЕ

ПУР ГРАЖДАНСЕНЧЕН ТАТА ОРГАНИЗАЦИСЕНЧЕН ОКТĂБЕРĔН 28-мĕшпе НОЙАБĔРĔН 5-мĕш ХУШШИНЧЕ

БУЛКĂСЕМПЕ КОНДИТĔР ТАВАРĔСЕМ:

ТОРТСЕМ, ПИРОЖНАЙСЕМ, КЕКС ТАТА ЫТ. КОНДИТĔР ТАВАРĔСЕМ ХАТĔРЛЕСЕ ПАМА

МАЛТАНАХ ЗАКАЗ ИЛЕТ

тата киле леçсе пама та заказ илет.

Вăхăтра, нойабĕрĕн 5-мĕшчен заказ пама васкăр. Нойабĕрĕн 5-мĕш хыççăнхи заказа пурнăçа кĕртме магазин гаранти памасть.

Пысăк заказсене организацисем таварне йлес умĕн укçан тӳлесе илеççĕ.

ПРОДМАГ.

„ЧĂВАШ КОММУНЕ“ СЫРĂНСА ИЛМЕЛЛИ ХАКСЕМ ПĔР УЙĂХА 2 Т. 50 ПУС, 3 УЙĂХА 7 Т. 50 П., 6 УЙĂХА 15 Т., СУЛТАЛĂКА 30 ТЕНКĔ. ПОДПИСКĂНА СЫХĂНУ УПРАВĔСЕМ, ПИСЬМОНОСЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 613. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793. ф. 6. 58×84 п. л.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ОКТЯБӖР 10 ТУНТИКУН 234(5047) №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

21-мӗш ҫул тухать · ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ · Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 6—67, ред. заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн—4—40, парти пурнӑс пайӗн—0—85, ялхуҫалӑх пайӗн—4 — 97, совецсен пайӗн—0—88, промышленнӑс пайӗн—7—97, ялкорсен пайӗн—2—30, хежурнӑйӗн — 6—23.

Халӑх переписӗне ирттерме тӗплӗн хатӗрленер

Совет Союзӗнче 1939 ҫулти январӗн 17-мӗшӗнче халӑх переписӗ пуҫланать.

Пӗтӗм Союзри халӑх переписӗ—пысӑк ответлӑ ӗҫ, вӑл государствӑн политикӑлӑ ӗҫӗ, пӗтӗм халӑх ӗҫӗ. Халӑх переписӗне ҫавӑн пек хаклани тӗнчере урӑх ниҫта та ҫук, ӑна пирӗн ҫӗршывра ҫеҫ чыслаҫҫӗ.

Ленин учот ӗҫне йаланах пысӑккӑн хакланӑ. Социалисӑм вӑл учот,—тесе вӗрентнӗ Ленин.

Пирӗн Совет Союзӗнче ҫынсӗне учота илесси—уйрӑмӑнах пысӑк хисепре. Совет ҫӗршывӗнче ҫынран пахи, ҫынран хакли урӑх нимӗн те ҫук. „Тӗнчере пур хаклӑ капиталсенчен чи хакли, пур ӗҫре те чи кирлӗ капитал,—ҫынсем, кадрсем пулаҫҫӗ",—тет Сталин йулташ.

Пӗтӗм Союзри переписе ирттерни сталинла пилӗкҫуллӑхсенче пулса иртнӗ пысӑк улшӑнусене, социалисӑм ҫӗнтерӗвӗсене пӗтӗм тӗнче умӗнче уҫҫӑн кӑтартса парӗ.

Октябӗр революцийӗ пуличчен Российӑра халӑх переписӗ мӗн пурӗ те пӗрре кӑна—1897 ҫулта пулса иртнӗ. Ун чухне Российӑ империйӗнче учителсем 79 пин ҫын пулнӑ. Ҫав вӑхӑтрах пупсемпе манахсем—295 пин ҫын пулнӑ. Инженерсем мӗн пурӗ те 4 010 ҫын ҫеҫ пулнӑ. Вӗсенчен хӗрарӑмсем—4 ҫын. Тухтӑрсем 16.951 ҫын пулнӑ. Йумӑҫсенчен вара чухӑн пулман—вӗсем 13 пин ытла шутланнӑ. Ҫакӑн пек пулнӑ патша Российӗ вӑхӑтӗнчи перепис цифрӗсем.

Тӗпренех урӑхла халӗ пирӗн халӑхӑн сӑн-сӑпачӗ. Совет халӑхӗн культури хӑвӑрт ӳсет. Пирӗн ҫӗршывра кашни пин ҫынран 268 ҫын ӑҫта та пулин—шкулсенче, килте (заочнӑ), курсӗсенче т. ыт. те вӗренет. Ҫакӑн пек массӑлӑн, йышлӑн вӗренни тӗнчере урӑх ниҫта та ҫук.

Перепис цифрӗсем совет ҫыннисен ӗҫ квалификацийӗ хӑвӑрт улшӑнса пынине—ал ӗҫӗ машин ӗҫӗпе улшӑнса пынине, ҫынсем пӗчӗкрех професҫисенчен пысӑкрах професҫисене куҫса пынине кӑтартӗҫ.

Пулас перепис цифрӗсен хушшинче Совет Союзӗнче ӗҫсӗрлӗх пуррине курма пулмӗ. Ӗҫсӗрлӗх пирӗн ҫӗршывра ӗмӗрлӗхех пӗтнӗ. Чикӗ лешийӗнчи ҫӗршывсенче 1939 ҫулти перепис материалӗсемпе паллашнӑ май, ӗҫсӗрлӗхе социалисӑмлӑ ҫӗршывра кӑна пӗтерме май пуррине лайӑх ӑнланса илӗҫ.

Совет Союзӗнче халӑх переписӗсем пӗрре кӑна мар пулса иртнӗ. Октябӗр революцийӗ хыҫҫӑн пирӗн ҫӗршывра халӑх переписӗ виҫӗ хут—1920, 1926 тата 1937 ҫулсенче пулнӑ. Йулашки переписе ирттернӗ чухне халӑх хуҫалӑх учотӗнче ларнӑ халӑх тӑшманӗсем—троцкисла бухаринла бандитсем сахал мар сӑтӑр кӳнӗ, вӗсем учот ӗҫне пур майсемпе те пӑтраштарма тӑрӑшнӑ, переписе йурийех пысӑк ҫитменлӗхсем, йӑнӑшсем туса ирттернӗ. ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1937 ҫулти сентябӗрӗн 25-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленире 1937 ҫулти январӗн 6 мӗшӗнчи переписе организацилени—ҫителӗксӗр, перепис материалӗсем— йурӑхсӑр,—тесе йышӑнса хӑварнӑ.

1939 ҫулти переписе ирттерме пирӗн пур йенчен те тӗплӗн хатӗрленес пулать. Вӑл перепис клас кӗрешӗвӗ хайарран пынӑ условисенче пулса иртессине пӗре те манмалла мар. Фашисен агенчӗсем—троцкисла-бухаринла тата буржуаллӑ националисла тӑшмансем ҫитес переписе ӑнӑҫлӑн ирттерессине те чӑрмантарма пӑхӗҫ. Пытанса йулнӑ тӑшмансене тӑрӑ шыв ҫине кӑларасси, перепис ирттерессинче учот ӗҫне туса пыракан органсене пулӑшасси—Совет Союзӗнчи кашни гражданинӑн чыслӑ ӗҫӗ пулса тӑрать.

Партипе совет организацийӗсен перепис ирттерме тӗплӗн хатӗрленес ыйту тавра массӑлӑ ӑнлантару ӗҫне анлӑн йӗркелемеле. Переписе мӗншӗн ирттернине, ӑна мӗнле ирттермели йӗркесем ҫинчен кашни ҫынӑн пӗлсе тӑмалла. Ҫакна пирӗн хӑшпӗр парторганизацисемпе совет органӗсем тивӗҫлипех хакламаҫҫӗ.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ сентябӗрӗн 21-мӗшӗнче пулнӑ ларура уйрӑмӑнах Йӗпреҫпе Ҫӗмӗрле райӗҫтӑвкомӗсем халӑх переписӗ политикӑпа хуҫалӑх ыйтӑвӗсем йенчен пысӑк вырӑнта тӑнине хакламанни ҫине кӑтартса панӑччӗ. Асӑннӑ райӗҫтӑвкомсем перепис кадрӗсене (счотчиксемпе инструктӑр-контроԓорсене) тупса ҫирӗплетес ӗҫе нумай вӑхӑта, вӑраха чӑснӑ. Райӗҫтӑвкомсем ҫумӗнчи кадрсем тупса хатӗрлес йӗнӗпе ӗҫлекен комисҫисем сентябӗрӗн иккӗмӗш ҫурӑйӑхне ҫитиччен нимӗн те туман, кайран вара, перепис кадрӗсене ҫирӗплетме тытӑнсан, вӑл ӗҫе ытах та васкавлӑ тума пуҫланӑ, пӗр ларурах ҫӗршер ҫынна ҫирӗплетес ҫул ҫине тӑнӑ.

Йалсоветсем ҫумӗнче перепис ӗҫне пулӑшакан комисҫисем организацилесси начар пырать, организациленӗ комисҫисене те ӗҫре пулӑшса пыни ҫук.

Ҫӗмӗрле хулинче ку тарана ҫитсе те ҫуртсен, хватерсен номӗрӗсене, урам йачӗсене йӗркелесе тухман.

Переписе хатӗрленес ӗҫре кайа йулнисем Йӗпреҫпе Ҫӗмӗрле районӗсем ҫеҫ мар. Ӗҫ ытти районсенче те ҫавнашкалах.

Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Хуракасси йалсоветӗнче (председателӗ Гаврилӑв), Шуркасси йалсоветӗнче (председател Ваҫилйӗв) перепис ирттерме пулӑшакан комисҫисем туман. Вӑл ӗҫе вӗсен августӑн 15-мӗшӗнчех туса ҫитермеле пулнӑ. Камайӗвӑ, Водолей тата Нарат Чакки йалсоветсенче халӗ те перепис ирттересси ҫинчен халӑха ӑнлантарса пама тытӑнман.

Халӑх хуҫалӑх учочӗн инспекторӗсем вырӑнсенче час-часах пулаҫҫӗ, анчах ҫак ӗҫе вӑйлатас пирки нимӗн те тумаҫҫӗ, йалсоветсене пулӑшмаҫҫӗ.

Перепис ҫинчен ӑнлантарса парассине Канаш хулинче те кирлӗ пек йӗркелемен. Рабочисем, килхуҫи хӗрарӑмӗсем хушшинче перепис ирттересси пирки калаҫусем туман.

Елӗк районӗнче те ҫак ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем палӑраҫҫӗ. Перепис ирттерес ӗҫе кунта учителсене сахал хутшӑнтараҫҫӗ. Елӗкри вӑтам шкулта 25 учител, вӗсенчен пӗрне те перепис ирттерес ӗҫе хутшӑнтарма палӑртман. Хирлеппуҫ йалсоветӗнче перепис ирттерме пулӑшакан комисҫи членӗсене халӗ те йалсовет президиумӗнче ҫирӗплетмен. Вулав ҫурчӗсенче, ҫавӑн пекех районри клубра та перепис кӗтесне организацилемен.

Переписе хатӗрленес ӗҫе пӗр тӑхтамасӑр вӑйлатса йани кирлӗ. Райӗҫтӑвкомсен президиумӗсен ларӑвӗсенче йалсовет председателӗсен, халӑх хуҫалӑх учот инспекторӗсен доклачӗсене итлес пулать. Йалсоветсем, урам комитечӗсем, пысӑк колхозсемпе предприйатисем ҫумӗнче перепис ӗҫне пулӑшакан комисҫисене туса ҫитермеле. Халӑх хушшинче массӑлла ӑнлантару ӗҫне, счетчиксем, инструктӑр контроԓорсем, перепис ӗҫне пулӑшакан комисҫисем хушшинче переписе лайӑх хатӗрленес ыйтусем тӑрӑх социалисӑмлӑ ӑмӑрту организацилемеле.

1939 ҫулти халӑх переписне пур йенчен те тӗплӗн, лайӑх хатӗрленсе ирттерер. Пулас перепис совет государствин хӑватне тата унӑн чысне татах та нумай ӳстерӗ.

Совет Союзӗ тӑрӑх

** Днепропетровск облаҫӗнчи колхозниксен перекет кассисене хывнӑ укҫи кӑҫалхи октябӗрӗн 1-мӗшӗнче 50.161 пин тенкӗ шутланнӑ. Кӑҫалхи июлӗн 1-мӗшне вкладсем 9.350 пин тенкӗлӗх пулнӑ. Кӑҫалхи ҫул тырпул пысӑк тухӑҫлӑ пулни колхозсен финанс хӑватне тата ытларах тӗреклетрӗ.

** Волховстрой — Кировск чукуҫулӗ ҫинчи депо машинисчӗ—кривоносӑвӑҫ Трубников йулташ Волховстрой—Тихвин участокӗнче 1.400 метр тӑршшӗ пуйӑс чуптарса тухнӑ. Пуйӑс составӗнче 162 пушӑ вакун пулнӑ. Пуйӑс график тӑрӑх сехетре 26 километр хӑвӑртлӑхпа пынӑ.

** Октябӗр 21 ҫул тултарнӑ уйав тӗлне Смоленск облаҫӗнчи нумай колхозсем ҫӗнӗ клубсемпе культурӑ ҫурчӗсем тӑваҫҫӗ. Облаҫра пурӗ 80 колхоз клубӗ тӑваҫҫӗ. Виҫӗ район центрӗнче культурӑ ҫурчӗсем тӑваҫҫӗ. (ТАСС).

Чехословакири лару-тӑру

Чехословакири компарти Тӗпкомӗн резоԓуцийӗ

ПРАГА, октябӗрӗн 7-мӗш. Чехословакири коммунисла партин Тӗп Комитечӗн октябӗрӗн 5-мӗшӗнче пулнӑ пленумӗ компартин Тӗпком секретарӗ Готвалд тунӑ доклад тӑрӑх резоԓуци йышӑннӑ, вӑл резоԓуцире ҫапла каланӑ: „Пирӗн капиталисла „союзниксемпе" „туссем" пулӑшса тӑнӑ агрессӑр хӗснипе Мӳнхӗнри совещанире Чехословакине йӑвӑр суран кӳчӗҫ.

Ҫак историлӗ сехетре коммунисла парти ҫакна каласа пӗлтерет: событисем ҫавӑн пек аталанса пынӑшӑн компарти нимӗн чухлӗ те ответлӑ мар. Ҫав ӗҫе пулма парас мар тесе епӗр йулашки минутченех мӗн кирлине йӑлтах туса пынӑ. Кам тӗрӗс пулнӑ, иккенне малашне ҫывӑх вӑхӑтра пулас ӗҫсем кӑтартса парӗҫ.

Хаԓхи вӑхӑтра пуринчен ытла ӗҫсене малашне хӑш майлӑ туса парасси ҫинчен сӑмах пырать.

Чехословаки халӑхӗ, тесе кӑтартса парать резоԓуци, пуринчен малтан чехсемпе словаксем хӑйсем тӑрпӗччен тӑрса йулнӑ пек туймалла мар. Буржуази интересӗсене шута илсе, Франципе Англин хаԓхи вӑхӑтри правителствисем пире пӑрахрӗҫ, анчах вӑл ҫӗршывсенчи халӑхсем пирӗнпе. Вӑл халӑхсем Мӳнхӗнпа нимӗн те ҫыхӑнса тӑмаҫҫӗ.

ССР Союзӗ те ҫавӑн пекех, Мӳнхӗнри заговорпа нимӗнле те ҫыхӑнса тӑмасть. ССР Союзӗ Чехословаки халӑхӗн тусӗ пулнӑ тата хаԓ те вӑл унӑн тусӗ. Пӗтӗм демократилӗ тӗнче вӑйӗсем пирӗн йенче. Ҫав пӗтӗм вӑйсем пире ӗҫлӗ пулӑшу пама пултарайманни ҫакӑнтан килет: епӗр кӗрешмесӗрех кайала чакрӑмӑр.

Ҫавӑн пек лару-тӑрура, ӗнтӗ дисциплинӑна ҫухатмасӑр, лайӑх йӗркелӗн кайала чакасси ҫеҫ йулать, урӑх нимӗн те тума ҫук. Май килнӗ таран нумайрах хӑтарса хӑварассишӗн кӗрешес пулать. Ку ӗнтӗ, пуринчен те малтан, плебисцит ирттермели районсем пирки. Словакире тата Закарпат Украининче генлейнӑвшчинӑ ан пултӑр тесе, мӗн кирлине йӑлтах тӑвас пулать. Ахаԓ мар ӗнтӗ Словакипе Закарпат Украинине чӑнкипе мӗн кирлине пӗтӗмӗшпех парас пулать. Анчах йут державӑсем хушнипе ӗҫлесе пыракан елементсене хирӗҫ пӗтӗм вӑйа хурса кӗрешмеле. Халӑхӑн, тенӗ резоԓуцире, ҫакна ӑнланса илес пулать: епӗр нумай ҫухатрӑмӑр пулсан та, пирӗн чи кирлине—ирӗклӗхе, демократине тата Чехословакин никама пӑхӑнасмарлӑхне ҫухатас пулмасть.

Республикӑ кун ҫулне татса пыракан ҫак кунсенче чех тата словак халӑхӗ никӑҫан пулман пек пӗрлӗхлӗ. Вӑл пӗрлӗхе сыхласа хӑварас пулать. Ана политикӑпа организацилӗх тӗлӗшӗнчен ҫирӗплетсе хурас пулать.

Пуринчен те малтан республикӑри рабочи клас вӑйӗсене пӗтӗмӗшпех ҫирӗплетсе ҫитерес пулать. Тӗп Комитет, тӗрлӗрен предприйатисенчи рабочисем, мӗнле политикӑлӑ организацисенче тӑнине пӑхмасӑр, рабочи класа профсойуз, коопераци тата политикӑ йӗнӗпе пӗрлӗхлӗ тӑвассишӗн кӗрешӗве ҫӗкленни ҫинчен калакан сведӗнисем илсе тӑрать.

Тӗп Комитет: массӑсен ҫак пуҫарӑвӗ рабочи класӑн пӗрлӗх ҫулӗ ҫинчи пӗтӗм чӑрмавсене ҫӗмӗрсе тӑкӗ, тесе шанса тӑрать тата ҫак историлӗ ӗмӗте пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе мӗн кирлине йӑлтах тумашкӑн политбӳрона хушса хӑварать.

Гитлӗрӑвӗҫсем Судет облаҫӗнче хуҫа пулса тӑнӑ

ПРАГА, октябӗрӗн 8-мӗш. Ӗнер Гитлӗрпа Геринг тӑваттӑмӗш зонӑри Германи ҫарӗсем йышӑнса илнӗ районсене пырса кайнӑ (Моравски Силези).

Судет облаҫӗнчи Германи ҫарӗсем йышӑннӑ районсенче фашисла Германи йӗркисене туса хураҫҫӗ. Германи ҫарӗн командованийӗ, облаҫри пӗртен-пӗр влаҫ органӗ пулса тӑраканскер, халӑх аллинчи мӗнпур вырӑх-чӗрлӗхсенчен виҫҫӗмӗш пайне хӑй аллине илнӗ. Ҫавӑн пекех тӗш тырӑсене халех ҫапса пӗтерсе „ытлашши" тырра пӗтӗмпех, командовани кӑтартса панӑ хакпа, ҫар аллине пама распорйажени каларнӑ. Кашни хресчен килне хӑйӗн ҫемйине тӑрантарса усрама кирлӗ чухлӗ кӑна тырӑ хӑварма хушнӑ.

Хеб хулинче ӗҫсӗр йулнӑ рабочисене пурне те „ӗҫ повиннаҫӗн" лагӗрне йараҫҫӗ. Судет облаҫне полицин пысӑк вӑйӗ пырса ҫитнӗ. Темиҫе ҫӗр рабочине арӗсленӗ. Фашисла „Судет нимӗҫӗсен корпусне" Гиммлер (гестапо начаԓникӗ) аллине параҫҫӗ, вӑл вара „пулӑшакан" полици вырӑнӗнче ӗҫлекенни пулать.

(ТАСС).

Германи ҫарӗсем Чехословакин ҫӗнӗ районӗсене йышӑнаҫҫӗ

Мӳнхӗнре йышӑннӑ решени тӑрӑх тунӑ пӗтӗм тӗнчери комисҫи текенскер пӗтӗмпех Гитлӗр майлӑ ӗҫлесе пырать. Ҫав комисҫи Чехословакин чылай ҫӗнӗ районӗсене Германине памала тунӑ. Вӑл районсене Германи йышӑнмали „пиллӗкӗмӗш зона" кӗртнӗ. Германи аллине памала тунӑ ҫӗнӗ районсем економикӑ тата ҫар стратеги йенӗпе калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Германине куҫакан Цвойма районӗнче кӑмрӑк кӑлармалли пысӑк шахтӑсем, Полчка районӗнче тӑрӑ туса кӑларакан пысӑк савӑтсем нумай т. ыт. те.

Октябӗрӗн 7-мӗшӗнче Германи ҫарӗсем „пиллӗкӗмӗш зонӑна" кӗрекен чылай районсене йышӑннӑ.

Германи ҫарӗсем „пиллӗкӗмӗш зонӑна" кӗрекен районсене йышӑнса пӗтерни хыҫҫӑн, Чехословаки территорийӗ 28.291 тӑваткӑл километр ҫӗр, ҫав территорипе пӗрле 2 811 пин нимӗҫ халӑхӗ тата 725 пин чех халӑхӗ Германи аллине куҫать, урӑхла каласан, Чехин пӗтӗм территоринчен ҫурри ытла пулать. Чехословакин тӗп хули Прагӑ чикӗрен 45 километрта кӑна пулать.

(ТАСС).

Судет облаҫӗнче нумай ҫынсем хӑйсене хӑйсем вӗлереҫҫӗ

Англире тухакан „Нью Кроникл" хаҫат ҫапла ҫырса пӗлтерет: Судет облаҫӗнче Германи ҫарӗсем йышӑннӑ районсенче ҫынсем хӑйсене хӑйсем вӗлересси нумайланса пыни палӑрать. Фашисен асаплӑ мӑшкӑлне тӳссе курас мар тесе ҫынсем малтан хӑйсен ачисене вӗлереҫҫӗ, унтан хӑйсем вилеҫҫӗ. Судет облаҫӗнчен тарса тухма ӗлкӗреймен антифашиссене ҫавӑн тах арестлесе гестапо (Германири вӑрттӑн полици) аллине панӑ. Вӑл ҫынсен малашлӑхӗ,—тесе ҫырать хаҫат,—хӑйсене хӑйсем вӗлернӗ ҫынсенниченӗ лайӑхах мар.

(ТАСС)

Испанири фронтсенче

Хӗвелтухӑҫри фронтра октябӗрӗн 7-мӗшӗнче пӑлхавҫӑсемпе интервентсен ҫарӗсем, авиаци пулӑшнипе, кӑшт малтарах, Вента де Кампосимосран кӑнтӑр йенчерех вӗҫсӗ. Республикӑ ҫарӗсем вӑйлӑ контратакӑ тунӑ. Ҫапӑҫу тӗттӗм пуличченех пынӑ.

Сывлӑшри ҫапӑҫура пӑлхавҫӑсен икӗ самоԓотне персе антарнӑ.

Ытти фронтсенче улшӑнусем ҫук.

(ТАСС).

В. С. Гризодубӑвӑ йулташпа тӳррӗнех ҫыхӑнса калаҫни

Октябӗрӗн 7-мӗшӗнче 15 сехет те 45 минутра Мускавпа Керби, телеграф провочӗ тӑрӑх тӳрех ҫыхӑнса, пӗр-пӗринпе калаҫма пуҫланӑ.

Мускавра аппарат умӗнче Правителствӑ Комисҫин членӗ М. Ф. Картушов йулташ пулнӑ.

Кербире аппарат умне В. С. Гризодубӑвӑ йулташ пынӑ.

Мускав: Гризодубӑвӑ йулташ, Правителствӑна доклад туса памашкӑн ҫак ыйтусем ҫине ответ пама ыйтатӑп:

„Родина" самоԓот анса ларнӑ вӑхӑт (Мускав вӑхӑчӗпе)?

Керби: „Родина" самоԓот 1938 ҫулти сентябӗрӗн 25-мӗшӗнче Мускав вӑхӑчӗпе 10 сехет те 41 минутра ҫӗр ҫине анса ларнӑ. Сывлӑшра пурӗ 26 сехет те 29 минут пулнӑ.

Мускав: Ҫав вырӑна мӗншӗн анса лармала пулса тӑнӑ? Бензин пулманнипе-и йе материаллӑ пай ӗҫлеме чарӑннипе-и?

Керби: Материаллӑ пай калама ҫук лайӑх ӗҫлерӗ. Пӗлӗтсем хушшипе нимӗн курмасӑр вӗҫнӗ хыҫҫӑн бензин ҫителӗксӗр пулнипе ҫав вырӑна анса лармала пулчӗ.

Мускав: Сирӗн сывлӑх мӗнле, Осипенко йулташпа Расковӑ йулташсен сывлӑхӗ мӗнле? Ку ыйтупа Сталин йулташ тата Правителствӑ уйрӑмах интересленеҫҫӗ.

Керби: Пурте сывӑ. Расковӑ ывӑнна, канӑҫ ыйтать.

Мускав: Анса ларнӑ хыҫҫӑн самоԓотӑн материаллӑ пайӗсем чиперех-и?

Керби: Самоԓот та, моторсем те чиперех, ҫӗмӗрӗлмен. Пур приборсем те, кабинӑсен чӳречисем, ҫав шутрах штурмӑн кабини чӳречисем те, ҫӗмӗрӗлмен, чип-чиперех. Ларасса шӑҫҫине кӑлармасӑр анса ларнӑ. Ҫӗр ҫийӗ шанса хытсан самоԓот вӗҫсе ҫӗкленме пултарать.

Мускав: Вӗҫев вӑхӑтӗнче радиополукомпӑс ӗҫлерӗ-и?

Керби: Радиополукомпӑс ӗҫлемерӗ.

Мускав: Байкала ҫитиччен мӗнле вӗҫсе пытӑр, пӗлӗтсен ҫийӗпе-и йе пӗлӗтсен айӗпе?

Керби: 4—7,5 пин метр ҫӳлӗшӗнче пӗлӗтсен хушшипе тата пӗлӗтсен ҫийӗпе вӗҫсе пытӑмӑр. Вӑтам ҫӳлӗш 6,5 пин метр пулнӑ. Байкалтан иртсен пӗлӗтсем хушшинче нимӗн курмасӑр вӗҫсе пытӑмӑр. Байкалтан иртсен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ йеннеле кайма шут турӑмӑр.

Мускав: Рекорда кирлӗ пек йӗркелес тӗлӗшпе мӗн тунӑ? Барографсем ӑҫта? Ҫӗмӗрлмен-и вӗсем? Вӗсем ҫинчи тата баксем ҫинчи пломбӑсем чип-чиперех-и? Анса ларни ҫинчен актсем ҫырнӑ-и? Ӗсӗр актсене ҫырса хатӗрленӗ пулсан, ӑна халех телеграф тӑрӑх Мускава ҫитерӗр.

Керби: Парашутсемпе сиксе аннӑ комиссарсем самоԓот анса ларнине акт ҫине ҫырса хучӗҫ. Баксемпе барографсем ҫинчи пломбӑсем чип-чиперех. Комиссарсем барографсене илчӗҫ, вӗсене Мускава илсе ҫитереҫҫӗ. Актсене ҫырса хатӗрленӗ, вӗсене кайарахпа пӗлтерӗпӗр, мӗншӗн тесен ҫынсем тин кӑна-ха йӑвӑр ҫул ҫинчен тухнӑ.

Мускав: Гризодубӑвӑ йулташ, „Правда" тата „Красная Звезда" хаҫатсен редакцийӗсем икӗ „пӗчӗк" ыйту пама ыйтаҫҫӗ: пурте интересленеҫҫӗ, тайгара мӗнле пурӑннӑ Ӗсӗр?

Керби: Тайгара епӗр, хамӑрӑн аслӑ социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршыв халӑхӗ тата Сталин йулташ пире пулӑшусӑр хӑварас ҫук, тесе шухӑшласа пурӑннӑ. Ман вақӑи тата Осипенко вақӑи апат-ҫимӗҫ ҫителеклӗ пулнӑ. Хамӑр тавра ҫӳрекен тискер кайӑксенчен сыхланма пирӗн хӗҫпӑшалсемпе патронсем ҫителӗклӗ пулнӑ.

Мускав: Расковӑ хӑйне хӑй мӗнле туйать?

Керби: Ун тӗлне килсе тухнӑ йӑвӑрлӑхсем хыҫҫӑн Расковӑ йулташ хӑвӑрт йусанса пырать. Вӑл паттӑр, хаваслӑ, ун вӑй-халӗ тапса кӑна тӑрать. Расковӑ тайгара вунӑ талӑк пурӑннӑ, унӑн пӗр плиткӑ ҫурӑ шоколад тата 18 патрон пулнӑ. Вӑл самоԓот патне хӑйех пычӗ.

Мускав: Тӗл пуличчен сывӑ пулӑр! Канӑр, Гризодубӑвӑ йулташ.

Керби: Кайатӑп. Ӗҫҫыннисене, пӗтӗм тантӑш-тӑвансене салам.

„Родина" самоԓотӑн геройла екипажӗ Комсомоԓска кайма тухнӑ

Кербире 20 сехет канна хыҫҫӑн, октябӗрӗн 8-мӗшӗнче Гризодубӑвӑ, Осипенко тата Расковӑ йулташсем катӗр ҫине ларса Комсомоԓска кайма тухнӑ. Кербири халӑх „Родина" самоԓотӑн геройла екипажне ӑшшӑн ӑсатнӑ.

Шӑпах 11 сехетре (Мускав вӑхӑчӗпе) катӗр ҫыранран уйӑрӑлса, Амгуԓ шывӗ тӑрӑх айалала хӑвӑрт ишме пуҫланӑ, ӑна ӑсатакансем хаваслӑ та саламлӑ сӑмахсем каласа кӑшкӑрса йулнӑ.

Сывлӑшри икӗ геройԓӑсемпе пӗрле 2-мӗш рангри ҫар врачӗ Тихӑнӑв йулташ пырать. Унсӑр пуҫне катӗр ҫинче тата: парашутис аслӑ лейтенант Йеремин йулташпа вырӑнти организацисен представителӗсем пур.

Амгуԓ шывӗн пырӗ патӗнче „Родина" самоԓотӑн хӑйулӑ та паттӑр екипажне виҫӗ вӑйлӑ катӗр кӗтсе тӑраҫҫӗ, вӑл катӗрсен командирӗ — РСФСР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Кочетков йулташ. Катӗрсенчен пӗрин ҫинче Гризодубӑвӑ, Осипенко тата Расковӑ йулташсем валли лайӑх кайутӑсем хатӗрлесе хунӑ.

(ТАСС).

Ленинградри стахановӗҫсен чаплӑ пуҫарӑвӗ

Лайӑх опытсемпе станок умне пырса паллаштараҫҫӗ

Ленинградри предприйатисенче Октябӗр уйавӗ умӗнхи социалисӑмлӑ ӑмӑрту сарӑлса пынӑ май, стахановла ӗҫӗн паха опычӗсемпе паллаштармалли ҫӗнӗ формӑ шухӑшласа кӑларнӑ. Стахановӗҫсем пӗр йевӗрлӗ предприйатисене кайса рабочи ӗҫлекен вырӑна пырса станок умӗнчех хӑйсен ӗҫ метачӗпе паллаштараҫҫӗ.

Свердлов йачӗпе тӑракан савӑтри стахановӗҫсем Енгеԓс йачӗпе тӑракан савӑта пырса хӑйсен опычӗпе паллаштарнӑ. Свердлов йачӗпе тӑракан савӑтри чи лайӑх долбежник Кожаровский йулташ Росҫӑв йулташ станокӗ ҫинче ӗҫлесе кӑтартнӑ. Вӑл деталӗсене ҫирӗплетес меслете улӑштарса тата ытти ҫавнашкал ӗҫе хӑвӑртлатакан йапаласем туса сменӑри нормӑна 680 процент тултарнӑ. Ҫак опыта Росҫӑв рабочи часах хӑнӑхнӑ, хаԓ Росҫӑв йулташ сменӑри нормӑна 600 процент тултарса ӗҫлет.

Свердлов йачӗпе тӑракан савӑтри стахановӗҫсен опытне Енгеԓс йачӗпе тӑракан савӑтри рабочисен производствӑлӑ канашлӑвӗсенче тӗплӗн сӳтсе-йаваҫҫӗ, унпала паллашаҫҫӗ.

Ҫак паха опыт металлӑран сивӗлех тӗрлӗ йапаласем туса кӑларакан участӑксене пуринче те анлӑн сарӑлса пырать.

(ТАСС)

Противогазсем тӑхӑнса массӑлла поход туса ирттернӗ

Кийӗври „Болшевик" савӑтра ӗҫлекенсен коллективӗ пуҫарнипе, октябӗрӗн 8-мӗшӗнче, Кийӗв хулинчи Октябӗр районӗнчи ӗҫҫыннисем противогазсем тӑхӑнса поход туса ирттернӗ. Похода 25 пин ҫын хутшӑннӑ, вӗсем сывлӑшри химилӗ тапӑнусенчен сыхланма хатӗррине кӑтартса панӑ.

Килхуҫи хӗрарӑмӗсем хӑйсен организацилӗхне уйрӑмах лайӑх кӑтартса панӑ. Вӗсен ушкӑнӗнче ПВХО ӗҫне лайӑх вӗреннӗ 300 хӗрарӑм пулнӑ. Походра 6 километра ӑнӑҫлӑн утса тухнӑ.

Ҫавӑн пекех автомат-станоксем туса кӑларакан савӑтри рабочисем те сывлӑшри химилӗ тапӑнуран сыхланма хатӗр пулнине лайӑх кӑтартнӑ. Ку савӑтра ӗҫлекен рабочисем походра 15 километра утса тухнӑ.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пропагандиссем хатĕрлемеле тата коммуниссене парти историйĕн Кĕске курсĕпе малтанлăха паллаштармала

Парти Тĕп Комитечĕ организацилене Комиççи, Сталин йулташ хăй хутшăнса ĕçленипе хатĕрлесе кăларнă „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" „Правда" хаçат пичетлеме пуçлана хыççăн чылай вăхăт иртрĕ. Парти райкомĕсемпе пуçламĕш организацисем çак ленинла-сталинла болъшевикла партин чаплă историлĕ документне колхозниксене, комсомолĕçсене тата партире тăманнисене вĕрентесси çинчен сўтсе-йаваççĕ.

Пурне те паллă—парти историн Кĕске курсне вĕренесси питĕ пысăк ответлă ĕç. Вăл ĕçе васкамасăр, кăшкăрашусăр, лайăх хатĕрленсе тумала. Васкавлăх ку ĕçре сийен анчах кўме пултарать.

„Ăнланас пулать: кунта йаланхи пек пĕр-пĕр чаплă та кĕске срукла кампанисем çинчен мар, план тăрăх, таранăн вĕренесси çинчен сăмах пырать. Хыпаланса ўкни, парадсенчи пек тĕрлĕрен шав туни çакăн пек ĕçре сийен çеç кўме пултараççĕ. Вĕсем пур пĕрех çийелтен çеç шăйăрттарса кайасси патне илсе пыраççĕ, вара тĕллев патне çитме пулмасть" („Правда")

Çавăн пек асăрхаттарнине райком руководителĕсем çителĕклĕ ăнланайман. Ун çинчен хаçат редакцине килекен çырусем аванах кăтартаççĕ.

„Палтайри (Йетĕрне р.) вăтам шкул çумĕнчи учителсем вальли ПСК(б)П историне вĕренмели кружок организацилерĕç. Кружок пĕлтĕртен варах ĕçлет, анчах пĕлтĕр сўрĕккĕн ĕçлесе пычĕ. Хĕл каçа вĕреннĕ пулин те икĕ темă çеç вĕренсе пĕтерне. Кружока кăçал А. П. Çтеперкин йертсе пырать. Кружок ПСК(б)П историне 3-мĕш темăран вĕренме тытăнчĕ"—тесе пĕлтерет С. Йакăвлĕв йулташ. Пĕлтĕр те сўрĕккĕн вĕреннĕ, çапах кăçал 3-мĕш темăран анчах пуçлаççĕ. Çакнашкал вĕренни йатне анчах туни пулать.

„Вăрнар поçолăкĕнчи кружоксем парти историне йĕркелĕ тата кĕске срукра вĕренсе пĕтерессишĕн тăрăшаççĕ",—тет В. С. Алексейĕв йулташ. Кунта та вырăнсăр васкаççĕ.

Хăшпĕр тĕлте мĕнпур политкружоксенче харăс ПСК(б)П историне вĕрентме тытăнаççĕ. „Çĕмĕрлери „Большевик" савăтра çентаберĕн 13 мĕшĕнче пур политкружоксем те ПСК(б)П историн 1-мĕш сыпăкне вĕренме пуçăнчĕç"—тесе çырать Иваницкий йулташ.

Кăтартнă фактсем пурте ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне вĕренес ĕç çине çийелтен пăхнине кăтартаççĕ. Хыпаланса ўкнипе хăшпĕрисем хатĕрленес ĕçе айккинеле тăратса хăвараççĕ.

Парти райкомĕсен çак йăнăша халех тўрлетмеле. Хатĕрленў ĕçĕнче пропагандиссене уйарса хурса, вĕсене курссенче, çеминарсенче вĕрентесси чи пысăк задачă пулса тăрать. Ку ĕç çителĕклĕ пырать тесе калама çук-ха. Хăшпĕр райкомсем çак ĕç çине çийелтен пăхнипе, пропагандиссене лайăххрах хатĕрлес вырăнне вăхăтлăх çеминарсем анчах туса иртереççĕ. Çавăн пек çеминарсенче парти вĕренĕвĕнче тухса тăракан ыйтусене кирлĕ таран тишкерме пулмасть. Çакна пур райкомсен те астумала. Паллах, ку ĕçе райком çекретарĕсем хăйсен аллине илсе хăйсем йертсе пымала.

Кружоксенче хальхи вăхăтра ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне уйрăмăн вулани пулмала. Пропагандиссем кашни коммуниса хаçат çинче тухнă ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне тĕплĕн вуласа тухса ăнланма пулăшмала.

„ПСК(б)П историне таранăн вĕренесси кĕске курс уйрăм кĕнеке пулса тухнă хыççăн пуçланать. Унчухне вара партилĕ вĕренў кружокĕсен чăннипех ĕçлеме пуçламала, хальхи вăхăтра унччен пропагандиссем хатĕрлес пулать тата коммуниссене Кĕске курспа малтанлăха паллаштарас пулать" („Правда").

Парти райкомĕ хăйĕн решенийĕсем мĕнле пурнăçа кĕнине тĕрĕçлет

ПАТĂРЙЕЛ, октаберĕн 5-мĕш. Партин çентаберĕн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ районри пухăвĕ аван çапас ĕçсене çентаберĕн 15-мĕш тĕлне, кĕрхи çĕртме ĕçне çентаберĕн 20 мĕшĕнче туса пĕтерме йышăнса хăварнă. Çак решенисем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тĕрĕçлесе ĕнер парти райкомĕ хăйĕн ларăвĕнче коммунис колхоз председателĕсен, МТС-па райçĕрĕç пайĕн руководителĕсен тата парторгсен очочĕсене итлерĕ.

Кĕçĕн Çĕрпўйелĕнчи парторг Леонидăв йулташ парти пухăвĕн решенисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ответлă пулса ĕçлемен. Вăл вĕсен парторганизацийĕ пĕрлештерсе тăракан колхозсенче çĕртме тăвас, аван çапас ĕçсем мĕнле пынине те пĕлмест.

„Первомайск" колхоз (председателĕ Мышов) 60 гектар тыррине çапса пĕтермен, кĕрхи çĕртме тăвасси татах 160 гектар йулнă. Çак ĕçсене вăхăтра туса пĕтерме май пулнă, анчах Мышов йулташ пĕтĕм ответлăхпа ĕçлемен. Колхозра 120 йахăн лаша шутланать, апла пулин та кĕрхи çĕртмере 3 кун хушши 4 лаша кăна ĕçленĕ. Кунта ытларах трактăрсем çине шанса лараççĕ.

„Ленин çулĕ" колхоз (председателĕ Альакин) çĕртме тăвас ĕçе ытла та кайа хăварнă—900 гектартан 72 гектар кăна сухаланă. 4 бригадă çĕртме тума пĕртте тухман. Ахаль тăракан лашасемпе усă курмаççĕ. Çавнашкалах ку колхоз государствăна тырă парас плана 60 проц., натурплатă 30 проц. çеç тултарнă. Ку колхоз МТС машинăсем çителĕкле панă пулсан та, ĕç вăйне кирлĕ тăр в мобилизацилеменни чăрмантарса пынă.

Йалсовет председателĕ коммунист Шадирйакăв йулташ колхоза ытла та çителĕксĕр пулăшать, колхозран сводкă илнипех лăпланать.

Сакатри „Хĕрлĕ йалав" колхоз та 83 гектар ыраш çапса пĕтермен, çавнашкалах туртăм вăйĕпе те усă курмаççĕ.

МСТ-па районри çĕрĕç пайĕн руководителĕсем йалхуçалăх ĕçĕсемпе оперативлăн йертсе пымаççĕ. МТС-ра 23 трактăр тĕрлĕрен сăлтавсемпе тата çуртисем çук пирки ĕçлемесĕр лараççĕ.

Районра 18 колхоз аван çапса пĕтермен, клеверпа люцернă 82,4 проц., кантăр 46,4 проц. çеç çапнă, çĕрулми 32,9 проц. кăна кăларнă, кĕрхи çĕртмене колхозсем 40 процента йахăн, йединоличниксем 3,12 проц. çеç сухаланă.

Йалхуçалăх ĕçĕсем кайа йулса пыни пуринчен ытларах районра сăтăрла ĕçсен йулашкисене ытла та вăрахăн пĕтерсе пынинчен килет.

Парти райкомĕ, райком решенийĕсене тивĕçлипе тата пĕтĕм ответлăхпа пурнăçа кĕртсе йалхуçалăх ĕçĕсене кĕске вăхăтрах туса пĕтерме кирлине кăтарса хăварчĕ. Ку решени вырăна кĕнине сывăх вăхăтрах тĕрĕçлеме йышăнчĕ.

Ник. Пушкин.

Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне А. М. Михайлăвă йулташа ПСК(б)П членĕн кандидатне илнĕ

ПАТĂРЙЕЛ. Пушкин йачĕпе тăракан колхоз председателне, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне, Чăваш АССР Верховнăй Совет председателĕн заместителне Аннă Михайлăвнă Михайлăвă йулташа партин Патăрйел райкомĕ ПСК(б)П членĕн кандидатне илчĕ. Нумайах пулмасть Михайлăвă йулташа Патăрйел райĕçтăвкомĕн социальнăй обеспечени пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлеме лартнă.

Н. П.

ПСÇЛКС 20 çул тултарас умĕн

● Шетмĕпуçĕнчи (Ишлей р.) туллимар вăтам шкулта комсомолĕçсемпе сойузра тăман çамрăксем ПСÇЛКС XX çул тултарнă йубилейе „отличнă" вĕреннипе кĕтсе илеççĕ. Комсомол организацин ĕçĕсем лайăхланнă май, иртнĕ кунсенче 4 çамрăк комсомол ретне кĕчĕç. Вĕренекенсем комсомол XX çул тултарнă кун „Салют" пьесăна лартма хатĕрленеççĕ, савăсем калама вĕренеççĕ.

А. Смирнов.

● Аслă Чакри (Вăрмар р.) Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз çумĕнчи ПСÇЛКС пуçламĕш организацинчи комсомолĕçсем тăван çĕршыв аннемĕр вальли парнесем хатĕрлесе оборонă значокĕсен нормисене параççĕ. Халь 5 çамрăк комсомола кĕчĕç тата икĕ комсомолĕç парти кандидатне кĕчĕç. Комсомолĕçсем пурте хаçат-журналсем çырăнса илеççĕ. Колхозниксем хушшинче политикăлă-масăллă ĕçе сарса пыраççĕ.

В. Андрийанăв.

● Палтайри вăтам шкулта вĕренекенсем (Йетĕрне р.) ленинла-сталинла комсомол XX çул тултарнă тĕле кашни пĕрер парне хатĕрлеççĕ. Çветлов Иван „Спорт физкультурников" йатлă альбом хатĕрлет, Захарăв Петр илемлĕ ўкерчĕксен альбомĕ тăвать. Хĕрачасем илемлĕ тĕрĕсем хатĕрлеççĕ. Халь комсомол уйавĕ кун чаплă вечĕр тума, çав йатпа çтена хаçачĕсен уйрăм номĕрсене кăлармa хатĕрленеççĕ.

И Синдыков.

Комсомол организацийĕ ăмăртса ĕçлет

Канашри педучилищĕри комсомолĕçсемпе сойузра тăман çамрăксем Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автосавăтри çамрăк стахановĕçсемпе специалиссем чĕнсе каланине сўтсе-йавсанах хăйсем çине конкретла обйазателствăсам илсе, тăван çĕршыв аннемĕр вальли парнесем хатĕрлеме пуçларĕç.

Педучилищĕри комсомолĕçсемпе çамрăксем ленинла-сталинла комсомол XX çул тултарнине „отличнă" вĕреннипе тата оборонă значокĕсем илнипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Халь ПВХО кружокĕнче 150 çын, ворошилăвла тĕл перекенсен кружокĕнче 90 çын, ГСО кружокĕнче 75 çын вĕренеççĕ. Кунсăр пуçне 40 çын авиамоделиссен кружокĕнче вĕренеççĕ. Кружок пуçлăхĕсенчен Й. Кириллăв комсомолĕç уйрăмăнах лайăх ĕçлесе пырать.

Вĕренекен çамрăксем хушшинче комсомол пуçланса кайни çинчен тата вăл мĕнле ĕçлесе пыни çинчен докладсем туса иртереççĕ.

Чăваш чĕлхипе вĕрентекен Ф. С. Меценатăв комсомол пурнăçĕ çинчен поемă çырса, йубилей каçĕ ăна çамрăксене вуласа пама хатĕрленет.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VI мĕш пленумĕ „Комсомола çĕнĕрен илнисем хушшинче ĕçлесси çинчен" йышăннă постановленине вĕреннĕ хыççăн комсомол организацийĕ çамрăк комсомолĕçсем хушшинче йатарласа уйрăмăн ĕçлеме пуçларĕ. Çак кунсенче тата 8 çамрăк комсомол ретне кĕчĕç.

Пирĕн педучилищĕри комсомол организацийĕ финанспа економикă техникумĕнчи организаципе ăмăртса ĕçлет. Комсомолĕçсемпе çамрăксем ăмăртура малти вырăна тухассишĕн кĕрешеççĕ.

П. Николайĕв, И. Васильйĕв.

Хаçатсене пăхса тухни вырăнне

„Халех татăклă улшăну тумала"

„Социалисăм çулĕпе" хаçатăн (Вăрнар р-нĕ) çентаберне октабĕр уйăхĕсенче тухнă номĕрĕсем ака мĕнпе палăрса тăраççĕ: хаçат çак уйăхсенче пуринчен ытла йалсоветсене, колхозсене „халех татăклă улшăну тумала" тесĕ приказсем парса ĕçлерĕ. Хаçатри статйасене, заметкăсене мăка чĕлхепе çырнă. Хаçатра ĕçлекенсем вулакансене йатлаçмасăр, приказ памасăр чăтаймаççĕ пулас.

„Социалисăм çулĕпе" хаçат çентаберĕн 3-мĕшĕнче çырать:

„Укçа-тенкĕ пухас ĕçре халех татăклă улшăну тумала".

„Халех парса татмала".

„Тўсме пултараймастпăр".

Тепĕр виçĕ кунтан, çентаберĕн 6-мĕшĕнче, хаçатра çакăн пек приказсем тухаççĕ:

„Ĕçре халех татăклă улшăну тумала".

„Çуттала" колхозăн йулса пырассине халех пĕтермеле".

„Григорйевăн çак çитменлĕхсене халех пĕтермеле".

„Государствăна тырă парас ĕçре кунашкал кайа йулса пынине нийепле те чăтма çук, ĕçре халех татăклă улшăну тумала".

„Вулав çурчĕсен ĕçне татăклăнах лайăхлатмала, райçутпайĕн вĕсене тивĕçлипе йертсе пымала",

Çентаберĕн 11-мĕшĕнче каллех „Социалисăм çулĕпе" хаçат „Осоавиахим членбилечĕсене улăштарас ĕçре татăклă улшăну тума" хушать.

„Райуполнаркомзаг работникĕсен колхозсемпе йединоличниксене государствăна вăхăтра тырă партарассипе конкретлăн та лайăххрах ĕçлемелех".

„Ĕçе чăн-чăн тивĕçлипе тытăнса, виççĕмĕш кварталăн укçа-тенкĕ пухмалли планне çентаберĕн 30-мĕшне тултармалах".

„Йалсоветĕнчи займ уполномоченнăйĕсемпе райфинанс пайĕн тата перекет кассинче ĕçлекен работниксен ĕçе татăклăнах вăйлатса, виççĕмĕш квартал финанс планне, ку шутра займ укçине пухассипе те октаберĕн пĕрремĕшне тултармалах".

Çакăн пек статйасемпе заметкăсене пуринчен ытла Волкăв, Козлов, Улангай, Крислов йулташсем „Социалисăм çулĕпе" редакци сотрудникĕсем çыраççĕ.

Хаçатăн культурине хăпартас, чĕлхине лайăхлатас тĕлĕшпе редакци пачах тăрăшмасть пулмала. Редакци сотрудникĕсем райкомран, райĕçтăвкомран, финанс тата çĕрĕç пайĕсенчен килнĕ сводкăсем тăрăх çеç çыраççĕ, вырăнта ĕçсем мĕнле танине пĕлмеççĕ, çавăнпа материалсем шăлсăр пулаççĕ, статйасем вĕсене мăка чĕлхепе çыраççĕ.

Çак фактсем хаçатăн автăрсем сахаллине кăтартса пăраççĕ. Парти, совет, комсомол тата хуçалăх организацисенче ĕçлекен активиссен статйисем хаçатра пачах та пекех тĕл пулмаççĕ.

Букварь пирки пĕр-ик сăмах

Пирĕн республикăри шкулсемпе республикă тулашĕнчи чăваш шкулĕсем çак кунсенче А. Т. Трофимăв хатĕрленĕ улттăмĕш изданипе тухнă çĕнĕ букварь илчĕç.

Букваре, малтанхи изданисемпе танлаштарсан, содержани йенĕпе те, оформлени йенĕпе те чылай авănлатнă.

Анчах автăр буквăсем паллаштарнă çĕрте хăшпĕр буквăна, предложенисем тĕрĕс тупмасăр, мала, çав буквăпа паллаштарман çĕре, кĕртсе йанă тата хăшпĕр сăмаха çĕнĕ орфорграфипе çырма хăтланса пăтраштарса пĕтернĕ. Сăмахран: букварăн 18-мĕш страницинче „Ш" буквăпа паллаштарнă çĕрте „пашалу" сăмах пур. Анчах букварь тăрăх „Л" буквăпа „Ш" буквă хыççăн çеç паллаштармала. 19-мĕш страницăра „Л" буквăпа паллаштарнă çĕрте „Раман, вула" предложени пур, букварь тăрăх „В" буквăпа чылай кайран çеç паллаштармала.

46 мĕш страницăра „Ферма" сăмаха вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсен правилипе çырнă, çав вăхăтрах ачасене тетрадсем çине „Фермă" тесе çырма хушать. 39-ш страницăра тата „Коль" тесе çыратъ, теме вăл сăмаха „Коля" тесе çыртармасть. Кунта орфографи тĕлĕшĕпе нимĕнле пĕрлĕх те çук.

61-мĕш страницăра „Пионер йурри" сăвăра „Танкăр-танкăр тапкăртатрĕ" тенĕ, ман шутпа „тăнкăр-тăнкăр тăнкăртатрĕ" тесен аванрах тухать пек. Çав сăвăрах „Йан йанах йанрарĕ пионер сасси" тенĕ, унта „Пионер йурри" темеле пулнă.

Орфографи правилисене кашни автăр хăйĕн учебникĕнче хăйне май пăтратать. Отачкинăн хăйĕн правилă, Трофимăвăн хăйĕн. Акă Отачкин „Тăван чĕлхепе вуламалли кĕнекен" пĕрремĕш пайĕнче „Чăвашсен Государствă Издательстви" тет, Трофимăв „Букварĕнче" „Чăвашсен Государство Издательстви" тенĕ.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕн çĕнĕ орфографи правилисене кăлармa тахçанах вăхăт çитнĕ.

Çакăнта кăтартнă çитменлĕхсем ĕçре нумай чăрмантараççĕ. Вĕсене пĕтермеле. Учителсемпе вĕренекенсем лайăх, тĕплĕн çырнă учебниксем кĕтеççĕ.

Çириккассинчи пуçламĕш шкулти учитель С. Йемельйанăв.

Йапăх ĕçленекен столовăй

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строительствинче Тракразйезĕнче ĕçлекенсем вальли Супар йалпове столовăй уçса панă. Кунçăн рабочисем малтанах питĕ савăнчĕç. Анчах савăнасси нумайа пымарĕ, столовăй çав тери йапăх ĕçлеме пуçларĕ. Апат пахалăхĕ йулашки вăхăтра чылай начарланчĕ. Хăшпĕр кунсенче столовăй апат та пĕçермест. Акă çентаберĕн 28-мĕшĕнче столовăй заведуйущийĕ Железнаков ĕçсе ўсĕрĕлнĕ те столовăйа та уçман т. ыт. те.

Столовăй йапăх ĕçлени пĕтĕмпех заведуйущийĕнчен килет. Анчах Супар йалпове Железнаков ĕçĕпе интересленнĕ-ши?

Шадровский.

Дм. Рудь

АКАДЕМИК В. Р. ВИЛЬЙАМС

Василий Робертович Вильйамс тивĕçлипех етемлĕхĕн прогрес йалавне тĕнче умĕнче çўлте тытса пыракан учонăй-революционерсен, учонăй борецсен чаплă ушкăнĕнче тăрать.

В. Р. Вильйамс 1863 çулти октаберĕн 10 мĕшĕнче Мускавра, инженер çемйинче çуралнă. Вильйамс амăшĕ—крепостной хĕрарăм пулнă. Вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, Вильйамс 1883 çулта Петровски йалхуçалăх академине кĕнĕ. Кайран ăна çавăнтах профессурăна хатĕрлеме хăварнă. 1888—1891 çулсенче Вильйамс йут çĕршывсенче научнăй командировкăра пулнă. Хăйĕн малтанхи кĕнекисенчех çамрăк Вильйамс агрикультурхимин кивĕ установкисене хирĕç пырса тăпра çимĕç паракан фактăрсем нумай йенлĕ пулнине, вĕсем пĕр-перинпе çыхăнса тăнине кăтартать. Нумай çулсем хушши çине тăрса ĕçленĕ хыççăн вăл хăйĕн агротехникă вĕрентĕвĕн никĕсĕсене хатĕрлесе çитерет. Анчах Совет влаçĕ пуçлансан çеç, колхоз стройĕ çĕнтерсен çеç унăн теорийĕ тивĕçлĕ вырăн тупать, унăн теорипе практикăра усă курма пуçлаççĕ.

Совет Союзĕнче пуçласа експлоататăрсем çын вăйĕпе усă курас йĕркене пĕтернĕ. Совхозсемпе колхозсем тунипе тĕнчери чи вăйлă, малта пыракан, социалисăмлă çĕрçĕ туса хунă.

В. Р. Вильйамс пирĕн çĕршывшăн тунă пысăк тивĕçлĕ ĕç вăл—социалисăмлă агротехникăн никĕсне хатĕрлени, агрономилĕ почвоведени туни, тăпра çинчен тата унăн çимĕç паракан пултарулăхĕ пĕрмайах аталанса пыракан условисем çинчен вĕрентекен саккун туса хуни пулать.

Марксисăм-ленинисăм вĕрентĕвĕ тăрăх, В. Р. Вильйамс тăпран çимĕç паракан пултарулăхĕ пĕрмайах чаксах пыни çинчен вĕрентекен буржуалă „саккуна" критиклерĕ. Вильйамс социалисăмлă йалхуçалăх условисенче тырпул тухăçлăхне хăпартма пысăк вăйсем пуррине тупса кăтартнă.

Вильйамсчен тăпрана вĕренес ĕçре сĕтекĕ пĕтнĕ тăпрасем çинчен, тăпрасем ĕмĕртен пĕр пек пулни çинчен, вĕсен вăхăт тулашĕнчи аталанăвĕ çинчен калакан механически шухăш пуç пулса тăнă. Вильйамс çутçанталăкра тăпра улшăнасси вăхăтсен тăрăшĕнче пулса пынине, çĕр çинчи тăпрасем тĕрлĕрен пулни, тĕрĕссипе илсен—тăпра улшăнăвĕнче пулакан уйрăм процессем вĕсем пĕтĕмĕшлĕ процесăн уйрăм пайĕсем пулнине çирĕплетсе кăтартнă.

Тăпрана сăнаса вĕренес ыйтăва Вильйамс çĕнĕле лартнă. Вăл тăпрана пĕр йенчен вĕренни (морфологи йенĕпе хăйне уйрăм, хими йе физикă йенĕпе хăйне уйрăм вĕренни), обйективнă усăлă пулсан та, тырпул тухăçне ўстересси çинчен тăракан ыйтăва татса парас йенĕпе исследователь аллине кирлĕ пек çăрауççи пама пултараймасть,—тенĕ. Вильйамс тăпрана вĕренес ыйту çине пĕтĕмĕшпе вĕренесси йенчен пăхать. Вăл ăна пĕр пĕринчен уйăрăлми пĕр ĕç, тĕрлĕ йышши, тĕрлĕ майлă процессем пĕр-пĕринпе çыхланса пĕрмайах аталанса пыракан ĕç вырăнне хурать. Вильйамс вĕрентĕвĕн тĕп никĕсĕнче—ўсен тăрансене сăнасси тăрать, çав ўсен-тăран аталанăвĕнчен тăпра улшăнса пырасси килет. Тăпрана çимĕç памала тăвакан елементсем,—тет Вильйамс,—шыв тата ўсен-тăрансен апачĕ. Вĕсемпе муклашкалă тăпра пулсан çеç туллин усă курма пулать, мĕншĕн тесен, çакăн пек тăпра анчах ўсен-тăрана çителĕклĕ таран шыв та, апат та пама пултарать.

Муклашкалă тăпра йалланлăхах тытăнса тăма пултараймасть. Тĕрлĕрен сăлтавсене пула—механически, физико-химически, биологически сăлтавсене пула, йалхуçалăх ĕçĕсем пулса пынăçемĕн тăпран муклашкалăхĕ, çирĕплĕхĕ пĕтме пултарать. Çавăнпа та Вильйамс вĕрентĕвĕн тĕп вырăнĕнче агротехникă ĕçĕсен çиçтеми тăрать. Агротехникă ĕçĕсем тăпра муклашкалăхне пĕрмайах çĕнетсе пыраççĕ. Ку йĕркене курăксен пусуçавăрнăш йĕрки тесçĕ. Çак çиçтемăн техникăлă пĕлтерĕшĕ вăл—йалхуçалăх производствине нумай çуллăха пыракан курăксен биологилĕ уйрăмлăхĕсемпе усă курма май панинче пулать. Кăпăш тымарлă культурăсемпе пĕрçĕ йышши культурăсем кĕске вăхăтрах тăпран муклашкалă структурине çĕнетеççĕ.

Çавăнпа пĕрлех, курăксен пусуçавăрнăш йĕрки, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл вылăх вальли витаминлă симĕс апатăн тĕреклĕ никĕсне хывать.

Курăксен пусуçавăрнăш çиçтемипе тата çĕре предплужниклĕ плугпа сухаласси таччăн çыхăнса тăрать. Агрономире чылай çулсем хушши тытăнса тăнă, çĕре ăшăхăн сухаламала текен сăтăрла „теори" сухара предплужниклĕ плугпа усă курма май паман. Вильйамс çак сăтăрла, ăшăхăн сухалама вĕрентекен „теорине" çĕмĕрсе тăкнă, вăл çĕре культурăлă ĕçлемели çиçтемă туса хунă.

Çĕр ĕçĕнче, Вильйамс шучĕпе, чи кирли вăл, кĕрхи çĕртме, ăна икĕ тапхăр тумала: тырра пуçтарса илсенех, малтан, лущильникпе сухаламала, ун хыççăн çĕртме сухи тумала.

Вильйамс агротехникăн тĕрĕс туса пымалли ĕçĕн тĕп пайĕ удобренисен çиçтеми пулать тесе шутлать. Çĕре апат парассипе курăксен пусуçавăрнăшĕпе çыхăнтарса пымала. Çавăн чухне тырпул тухăçлăхĕ вăйлă пулать.

Йулашкинчен Вильйамс тырпул тухăçлăхне хăпартас ĕçре тĕрĕс пусуçавăрнăшĕ тĕп вырăн йышăнса тăнине кăтартать. Çакăнта агротехникăн пĕтĕм ĕçĕ курăнса тăрать.

Вильйамсăн пĕтĕм тĕнчене паллă кĕнекисем тырпул тухăçлăхне ўстерсе пырасси çинчен, çĕрĕн тухăçне пĕрмайах хăпартса пырасси çинчен, урăхла каласан—ĕç тухăçлăхне прогрессивлă хăпартса пырасси çинчен, социалисăмлă тăвал çĕршыва чечеклентерсе пырасси, халăх массин пуйанлăхне хăвăрттăн хăпартса пырасси çинчен калаççĕ.

В. Р. Вильйамс Ленин—Сталин парти ретне хăй 65 çула çитсен кĕнĕ. Вăл большевисăмăн аслă идейисенче, тăван çĕршывшăн, коммунисăмшăн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлессинче хăйĕн иккĕмĕш çамрăклăхне тупрĕ.

В. Р. Вильйамс совет наукин тивĕçлĕ представителĕсенчен пĕри, вăл „халăхран уйрăлса тăман, хăйне халăхран инçетре тытман, халăхшăн ĕçлеме хатĕр тăракан, наукă кĕрешсе илнисене пĕтĕмпех халăха пама хатĕр тăракан, ирĕксĕр мар, ирĕккĕн, хавассăн халăхшăн ĕçлекен наукă" (Сталин) представителĕсенчен пĕри. Кашни кун Тимирйазĕв академичĕ, Вильйамс патĕнче, унăн тăпра лабораторинче вуншар агрономсем, колхозниксем пулаççĕ, унпа канашлаççĕ, агротехникăн тĕрлĕ ыйтăвĕсем тăрăх консультаци илеççĕ. Совет Союзĕн пур кĕтессисенчен те почтă лабораторине, Вильйамс патне çĕршер çырусемпе ыйтусем илсе пырать. Вăл хăй те, ун патĕнче нумайăн ĕçлекенсемпе вĕренекенсем те, пĕр çырăва та ответсăр хăвармаççĕ.

Совет халăхĕ хăйĕн чаплă, паллă ывăлне, виçĕ орден илме тивĕçлĕ пулнă В. Р. Вильйамса хытă йуратать. Вăл чăн-чăнах ленинла-сталинла сăнарлă политикăлă деятель. Ăна халăх ССРС Верховнăй Советне депутата суйларĕ. Иртнĕ çулти нойабĕр уйăхĕнче вăл хăйĕн суйлавçисем патне йанă çырура çапла çырчĕ: „Телейлĕ те савăнăçлă манăн ватă пурнăç. Хама хамăн та ĕненес килмест: ватăлăхах-ши вара ку?

Епĕ нихçан та пурăнăç савăнăçне, ĕçĕн савăнăçне хальхин пек таранăн туйса илмен. Епĕ хама тĕреклĕн туйатăп, мана халь анчах 20 çул çитнĕ çамрăк пек, çĕр чăмăрĕн улттăмĕш пайĕнчи чаплă пурнăçăн тантăшĕ пек туйăнать".

В. Р. Вильйамс социалисăмăн малашне пулас кунçулĕсем çинчен питĕ уççăн çырса кăтартать. Пайан учонăй агрономсем пĕлнине,—тет вăл,— ун чухне бригадирсемпе звенйевойсем çеç мар, пĕтĕм колхозниксем пĕлсе тăракан пулаççĕ.

Пайанах уйхир стахановĕçсем гектартан 80—100 центнĕр тырă, 1 500—2.000 центнĕр сахăр кăшманĕ, 12—15 центнĕр йĕтĕн сўсĕ, 150—200 центнĕр мамăк параççĕ пулсан, ыран мĕнле пулĕ тырпул тухăçлăхĕ? Вĕт ку цифăрсем пирĕн пĕтĕм социалисăмлă уйхир ĕçĕн вăтам цифрисем пулмала, часах пулĕç те".

„Пайанах,—тет вăл малала,—чылай ĕçре ыранхине курма пулать. Пайанах пирĕн тăван çĕршыв çĕнтерчĕ, социалисăм уйар хĕвел пек, тĕнче çинче капиталисăм касăнчи шăршлă тĕтĕмне усал тĕтрене сутатса тăрать. Ыранхи кун тата ытларах илемлĕрех пулать. Çак ыранлăх ĕнтĕ пирĕн аллăра, ăна епĕр хамăр тăватпăр, ăна епĕр хамăр çывхартатпăр. Ăна епĕр хамăрăн тўрĕ ĕçпе, хамăрăн геройла кĕрешўпе, Ленин—Сталин партийĕн никам çĕнтерейми йалавĕ айне тăрса, ăслисенчен те ăслă çын халăхсен генилĕ çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе çутçанталăка социалисăмла улăштарса çĕнетнипе тăватпăр".

Суртла çĕрулмине суйласа илсе ăна пăхса усрасси

Кăçал çанталăк уйар тăнă пирки çĕрулми лайăх ÿссе çитĕнеймерĕ. Çавăнпа та кашни колхозăнах вăрлăлăх çĕрулмине суйласа илсе ăна лайăх хĕл каçарасси çине уйрăмнах хытă çаварăнса пăхмала.

Вăрлăхлăх суйласа хăварнă çĕрулмине хĕл каçарма подвала хунă чухне чирлĕ çĕрулмисене сывви сенчен уйăрса илес пулать.

Кăçал йулса пулакан „вольтман" сурт çĕрулми кăçал хĕрлĕ тĕслĕ мар, шурă хĕрлĕ пулнă. Кĕркуннепе кăшт çăмăр пулни çĕрулмине хăвăртусме май панă.

Çĕтабĕр уйăхĕнче пулнă вăйлă çил-ăвăл хыççăн „вольтман" сурт çĕрулми ÿснĕ анчах мар, унăн хуппийĕ те кăштах хура-кĕрен курăнакан пулнă. Ун пек çĕрулми килес çул вăйлă çимĕç пама пултарать. Çавăнпа та, ун пек çĕрулми вăрлăхне суйласа илсе уйрăм вырăнта хурса усрамала.

Вăрăм пиççе ĕлкĕрекен „лорх" йатлă çĕрулми çентабĕр уйăхĕнчи çăмăрччен ÿсме пултарайман. Анчах унăн аври çентабĕрĕн иккĕмĕш çурри уйăхĕнче те симĕс ларнă вырăнсенче çамрăкрах, çийелтен пăхсан сывăрах та çирĕпрех çĕрулмисене вăрлăхлăх суйласа илме пулать. Чĕсмакăн ÿссе кайнă çĕрулми вăрлăхлăх йурамасть. Çавăн пек ытлашши вĕтĕ çĕрулмине те вăрлăхлăх хăварма кирлĕ мар.

Тепĕр чухне, питĕ çинçешке, тепĕр майлă каласан, хунавлă çĕрулми ÿсет. Ун пек çĕрулмисене вăрлăхлăх хăварма йурамасть. Çак примерсенчен ĕнтĕ вăрлăхлăх хăварма мĕнле суйлама кирли пуриншĕн те паллă. Кусемсĕр пуçне та та вăрлăхлăх çĕрулмине лайăх пулнă çĕртен илме тăрăшмала.

Вăрлăхлăх уйăрса хăварнă суртлă çĕрулмине иртнĕ çулсенчи йĕркесемпех пăхса усрамала. Çĕрулми хумалли вырăнта сывлăш 2 градус ăшă тăмала. Температурăна 1 градусран айала, 3 градусран çÿле хăпартмала мар. Хĕлĕпех пĕр пек температура тытмала. Подвала кĕркуннеччененех, сывлăшра икĕ градус ăшă йуличчен, уçăлтарас пулать.

Вăрлăхлăх çĕрулмине подвала хунă чухне çакна астумала: вĕтĕ çĕрулми шултрисенчен çăтрах вырăть, çавăнпа та вăрлăхлăх çĕрулмине ытлашши хулăм хума йурамасть, унăн хуламĕшĕ метр çурăран ытла, май килнĕ çĕрте пĕр метр хуламĕш çеç пулмала.

Вăрлăхлăх уйăрнă çĕрулмине подвала тĕплĕн суйласа хурсан, хĕллехи вăхăтра ăна суйлама та кирлĕ мар, чирленĕ уйрăм çĕрулмисене суйласа илсе пăрахнипе те çитет.

Сÿс-кантăр парса татрĕç

ЙĔТĔРНЕ Тушкасси йалсоветне кĕрекен „Октябрь", „Рекорд", „Бриневик" тата Володарский йачĕпе тăракан колхозсен кăçал сÿскантăр питĕ аван пулчĕ. Вырăнвырăнăн 2 метр çÿлĕш ÿснĕ. Хаљ пур колхозсенче те кантăра шыва хурса кăларчĕç. Государствăна план тăрăх памалине пур колхозсем те парса татрĕç.

Т. Йĕмелйанăв.

Колхоза кĕме пулăшаççĕ

Йермошкă (Вăрнар р.) йалĕнчи колхоз çамрăкĕсем халиччен колхоза кĕмен хуçалăхсем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе вăйлатсах пыраççĕ. Йединоличниксене государства умĕнчи обйазательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртме пулăшаççĕ. Иртнĕ уйăхра 17 хуçалăх колхоза кĕме зайавлени пачĕç, вĕсен зайавленийĕсене колхозниксен пухăвĕнче пăхса тухса пурне те колхоза илнĕ. Колхоза илнĕ хуçалăхсенчен пурте пекех: Г. Шикин, Д. Балыков, Г. Филиппăв государства умĕнчи пур обйазательствăсене те парса татнă. Вĕсем колхоза илнĕ хыççăнах, устав тăрăх, хăйсен лашисене колхоза пĕрлештерчĕç.

А. Владимирăв.

Перепиçе хатĕрленмеле

Хаљхи вăхăтра Пĕтĕм Сойузри халăх перепиçне хатĕрленес ĕç пур çĕрте те вăйланса пымала. Çапла пулсан та Йамаш йалсоветĕнче (Шăхасан р.) перепиçе хатĕрлелесси йапăх пырать-ха. Хуçалăх кĕнеки çинчи графасене тĕплĕн çырман, паллă туса пĕтермен.

Акă Çергей Çеменăв çемйинче пĕтĕмпе 8 çын пурăнать. Вăл шутран вĕреннисем 6 çын. Хаљхи вăхăтра çиччĕшĕ килте, тепĕр ывăлĕ 1932 çултанпа Хĕрлĕ Çарта пурăнать. Анчах хуçалăх кĕнеки çинче вĕсен çемйи хăшĕ мĕн чухлĕ вĕренни тата хаљхи вăхăтра хăшĕ хăш вырăнта ĕçлени çинчен паллă туман. Кун пирки йалсовет çекретарĕ Скворцов йулташран ыйтсан:

— Вĕсем килте пулман та, çавăнпа çырса тухайман,—тесе ответлерĕ. Кĕнеке çинче пĕр Çеменăв йулташ çемйине кăна мар, Дмитрий Краснов, Иван Куçмин т. ыт. йулташсен çемйисене те пĕтĕмĕшпех çырса пĕтермен.

Перепиçе хатĕрленес пулсан пĕр хуçалăх кĕнекине çырса тухнипех ĕç пулмасть. Кунсăр пуçне халăха перепис çинчен ăнлантарса парас пулать. Вулав çурчĕсенче, клубсенче, йалсоветсенче перепис çинчен çырнă хаçатсем, литературăсем вуламала, перепис кĕтесне организацилемеле. Анчах Йамаш йалсоветĕнче ку çук-ха.

Перепиçре ĕçлеме Тимофей Харитонăв йулташа (Йамашри туллимар вăтам шкулти вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ) инструктăра уйăрнă. Анчах вăл та ку таранччен халăх хушшинче пĕр калаçу та иртермерĕ.

Перепиçе хатĕрленес ĕçре улшăну тумала. Халăха перепис çинчен ăнлантарма тытăнас пулать.

А. Иванов.

Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту

Халех татса памали ĕççем

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинатри хăма çуракан цех 3-мĕш квартăл планне 110,1 процент тултарнă. Цех ĕçĕнче уйрăмăнах Шулайĕв, Куљковă, Çидйакинă йулташсем йертсе пыракан стаханăвла бригадăсем пысăк вырăн йышăннă. Вăл бригадăсем нормăна йаланах 110 процентран кайа мар тултарса пынă.

Цех коллективĕ Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса çулталăкри плана декабĕрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма пулнă. Стаханăвçсемпе ударниксем, рабочисем хăйсем илнĕ обйазательствăна пурнăçа кĕртессишĕн пысăк хастарлăхпа тăрăшаççĕ. Çменăсем, бригадăсем, пур рабочисем те пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Цех урапа цехĕпе ăмăртать. Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăртăва комбинатри цехсем пурте хутшăннă. Ăмăртура стаханăвçсен йышĕ ÿссе пырать.

Анчах та комбинат хăйĕн кулленхи планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраймасть-ха. Начар ĕçлесси—цехсене енерги тата пăс вăйĕ тăратас, чĕрĕ таварсем çителĕклĕ хатĕрлес ĕççене йĕркелемениннчен килет. Комбинат енергипе пăс вăйне „Бољшевик" савăтран илсе тăрать. Договăр тăрăх вăй паракан станцинче икĕ котол комбинат валљи ĕçлемелĕ. „Бољшевик" савăт руководителĕсем куншăн тăрăшмаççĕ. Çентабĕр уйăхĕнче авари пулнă хыççăн чи пирвайах енергипе пăс вăйĕ комбината пама чарнă. Çавăн пирки комбинатра 85 сехете йахăн простой пулнă.

Чăвашвăрманпром тата Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пункчĕ чĕр таварсем тăратас тĕлĕшпе тунă договăра пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Пĕтĕмпе ку тарана çитиччен 21 пин кубла метр парăма кĕнĕ. Октăбер уйăхĕнче ăнăçлăн ĕçлес пулсан 800 платформă йăвăç тăратмала. Анчах Чăвашвăрманпром 300 платформă кăна тăратма палăртнă.

Комбинат руководителĕсен пур цехсене те ăнăçлăн ĕçлеттермеле тума халех енергипе пăс вăйĕ тăратас ыйтăва тĕплĕн татса памала. Комбината чĕр таварсем тăратассине йĕркелеме республикăри партипе совет организацисем пулăшни кирлĕ.

М. Т.

Шмуринă бригади малта пырать

Шупашкарти спирт савăтĕнчи рабочисемпе инженерлă-техниклă работниксем Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнă уйав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине илнĕ обйазательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Ăмăртăва хутшăннă бригадăсенчен нормăна тултарманнисем çук. Ăмăртура уйрăмăнах Шмуринă йулташ йертсе пыракан бригадă паха примерсем кăтартса ĕçлет. Вăл октăбĕрĕн 1-мĕшпе 8-мĕш хушшинче кашни кунах вăтамăн шутласан нормăна 143,9 процент тултарса пынă. Богданавă, Пегайĕвă, Васçилйĕвă тата Çергейĕвă йулташсен бригадисем те лайăх ĕçлеççĕ. Богданавă йулташ бригади 8 кун хушшинчи плана 121 процент, Васçилйĕвă йулташ бригади 119,3 процент тултарнă.

Планран ирттерсе 4 пин тоннă руда кăларассишĕн

ВĂРНАР. Йăрар рудникĕ çулталăкри руда кăларас плана тултарчĕ. Пĕтĕмпе 33 пин тоннă руда кăлармала пулнă пулсан, октăбĕрĕн 5-мĕш тĕлне 33.069 тоннă кăларнă.

Рудникре ĕçлекенсем плана тултарнипе лăпланса лармаççĕ. Вĕсем Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă революци уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса планран ытлашши 4 пин тоннă руда кăларма пулчĕç. Вăл тĕлĕшпе рабочисем хушшинче социалисăмлă ăмăртупа стаханăвла йухăм анлăн саралса пырать. Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннăранпа рудник кулленхи плана 238 процент тултарса пырать. Стаханăвçсем: Александрăв йулташ 238 процент, Йегорăв йулташ 203, Чикушов йулташ 208, Николайĕв йулташ 195 процент тултарса пыраççĕ.

Н. К.

Чÿречесене лартман, алăксене йусаман

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинат посолăкĕнчи çуртсене, общежитисене хĕле кĕме хатĕрлес тĕлĕшпе çуртйĕр пайĕнче ĕçлекенсем питĕ вăраххăн ĕçлесе пыраççĕ. Чылай çуртсем пайанхи куна хĕллене хатĕр мар, хăлĕсен—чÿречисем çĕмрĕк, теприсен—алăкĕсем, кăмакисем йусавлă мар. Акă хапрăк-савăт шкулĕнче вĕренекенсен общежитинех илер. Ку çуртра 19 чÿречен кантăкĕсем çук, вĕсене фанерăпа çеç çапса лартнă. Алăксене те кирлĕ пек йусаса çитермен. 32-мĕшпе 34-мĕш çуртсенче иккĕмĕш хута хăпармалли пусма çĕмрĕк, чÿречесен хăшпĕр кусĕсем тухса ÿкнĕ.

Çуртсем валљи вутăсем те хатĕрлемен. Çуртйĕр пайĕн пуçлăхĕ Сухарйов çаксене лайăх пĕле-тăркачах ĕçе хăвăртлас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлени курăнмасть.

Н. Косăв.

Çĕнĕ цех

Çĕмĕрлери „Бољшевик" савăтра çак кунсенчех çĕнĕ цех ĕçлеме тытăнать. Машинăсене, станоксене вырнаçтарса çитерне те ĕнтĕ.

Çĕнĕ цех хаклă йышши продукци туса кăларать. Цеха пысăккăн механизациленĕ. Кашни рабочи кунта пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме пултарать.

(Хамăр инфор.).

Джузеппе Верди

Джузеппе Верди опĕрă искусствин пысăк тата паллă маçтăрĕсенчен пĕри пулнă, вăл 125 çул кайала, 1813 çулти октăбĕрĕн 10-мĕшĕнче çуралнă.

Верди тусa хăварнă паха ĕççене, унăн музыкăлă произведенийĕсене совет сцени курăнулă вырăн парать. Ĕлĕкрех унăн „Луиза Миллер" йеврĕлĕ манăçа йулнă произведенисене халĕ тепĕр хут сценă çине кăларнипе çеç мар, тата „Травиата", „Отелло" опĕрăсене вĕрçĕнĕрен лартма пуçлаççĕ. Унăн çав тери лайăх „Реквием" те пирĕн сценă çинче паха вырăн йышăнать.

Пирĕн музыкă итлекенсем Вердине лайăх пĕлеççĕ, вăл çырса хăварнă произведенисене йуратса итлеççĕ. Революцичченхи естетсем ахаљтен мар ĕнтĕ Вердине хака хумасăр тăнă, мĕншĕн тесен халăхăн сарлака масси Вердине йуратнине ăнланнă вĕсем, халăха Верди произведенийĕсенчен сивĕтесшĕн пулнă.

Верди çуралнă çĕршыв—Парм провинцинчи Ронколе йатлă йал (Çурçĕр Игали). 1831 çулта вăл, благотворителсен общĕствин средствипе Миланри консерваторине вĕренме тесе кайнă. Унта кайнă чухне ăна Австри влаçĕсем панă паспăрта илме тĕл килнĕ. Вăл вăхăтра Милан Австри влаçĕсен аллинче пулнă. Халăх „хăй çуртĕнче хăй хуçа пулмала" тенĕ шухăшпа питĕ те килĕшнĕ Верди. Çак чăнлăха вăл çамрăклах ăнланнă, кайран та каласа çÿреме йуратнă.

Пианист ĕçне çителĕклĕн хатĕрленсе çитеймен пирки Верди консерваторине кĕреймен. Вара вăл Миланри музыкант Винченцо Лавиньйĕ патĕнче вĕренме пуçлать. Лавиньйĕ композитăр тата дирижор та пулнă. Çапах вăл Вердине çителĕклĕ пĕлÿлĕх пама пултарайман. Кайарах Верди хăйĕн вĕренÿ çулĕсене питех хавхаланса асăнман. Мĕншĕн тесен Лавиньйĕ патĕнче вăл музыкăна мар, „нотăсене" ытларах вĕреннĕ. Пулас чаплă композитăр йатлă музыкантсемпе çыру çÿретсе тăнипе тата классиксен сочиненисене тĕплĕн тишкĕрсе пынипе çеç хăйĕн художĕствăлă пĕлÿлĕхĕн шăйрăкĕсене ăнăçулăн тикĕслесе çитерме пултарнă.

Çамрăк Вердин малтанхи опĕрăлă произведенийĕсем, паллах, пурйенчен те пиççе çитейменскерсем пулнă. Çапах вĕсенче куçа курăнакан мухтава тивĕç тĕслĕхсемех пур. Чи малтанах, вăл çырнă произведенисен çÿжечĕсем питĕ те характĕрлă. Акă, сăмахран, „Аттила" произведени, 1846 çулта çырнăскер, Рим хули хăйне пусмăрлакан гуннсене хирĕç мĕнле кĕрешнине кăтартать; „Жанна д'Арк" произведени, 1845 çулта çырнăскер, Франци XV-мĕш ĕмĕрте тăван çĕршĕн мĕнле кĕрешнине; „Навуходоносор" произведени, 1842 çулта çырнăскер, йут çĕрти тыткăнра пурăнакан йеврей халăхĕн пурнăçĕпе кĕрешÿне кăтартса парать.

Верди композитăрпа ăна итлекен аудитори пĕр сывлăшпа сывланă—вĕсен пĕр идейă пулнă. Çав вăхăтри Италин, йутçĕршыв çар гарнизонĕсем çĕмĕрсе кĕрсе ваклаcа пĕтернĕскерĕн ăраскалĕ пекех сценă çинче пулса иртекен событисене курсассăн, залри халăх çав событисем чăн пурнăçран илнĕскерсем иккенне туйса тăвăллăн алă çупнă, ырăласа кăшкăрнă. Халăха лăплантарас тĕлĕшпе Австри жандармерийĕн сыхă тăма тĕл килнĕ.

Иртнĕ ĕмĕрти 50-мĕш çулсем Верди творчествишĕн тата унăн çĕршывĕшĕн чи паллă çулсем пулса тăраççĕ. Çав çулсенче Италине йут çĕршывсен пусмăрĕнчен хăтарассипе вăйлă кĕрешÿ пынă. Çак событисем Вердине питĕ хĕрÿлĕн хумхантарнă, вăл событисем çинчен Верди музыкант пулса тата чăн-чăн граждани пулса тухса калавă. Вăл „Звучит труба" гимнăн авторĕ. Верди ку гимна Мадзини хушнă тăрăх çырнă. Вăл ку вăхăтра Гарибаљди шухăшĕ йенче тăнă, Верди хăй каланă тăрăх, Гарибаљди умĕнче вăл ÿксе пуççапма та хатĕр пулнă. Наци гварди валљи хĕçпăшал туйанас ĕçе те Верди нумай укçа тенкĕ хунă.

Çав çулсенче Верди „Риголетто", „Трубадур", „Травиата" опĕрăсене çырнă. Çак асăннă опĕрăсен çĕнĕлĕхĕ халĕ те кивелмен-ха,—искусствăра вĕсем чи хаклă мерчен пек йалкăшса тăраççĕ.

Верди çырнă музыкă—чăн-чăн „халăх йурăçин" музыки, вăл музыкăра халăхăн хавасланăхĕ, хуйхи, пăшăрханăвĕ, пусмăрлăха хирĕç кĕрешме йыхăракан сасă хăватлăн йанăрать. Верди халăх хушшинче çÿрекен йурăсемпе вăйлăн уса курнă, хăйĕн творчествине вăл халăх творчествипе çыхăнтарнă, пуйанлатнă. Анчах Верди халăх йуррисене çаплипех „механически" илсе музыкă çине хуман. Вăл вĕсем çинче мĕнпур вăйне, пĕлÿлĕхне хурса тăрăшулăн ĕçленĕ. Çавăнпа та унăн музыки халăх музыкинчи лайăх пайĕ пулса тăнă.

1867 çулта Верди XIX-мĕш ĕмĕрти чи пысăк опĕрăсен шутне кĕрсе йулнă „Дон Карлос" опĕрăна çырнă. Илемлĕх, хăшпĕр арийĕсен тата ушкăнпа тухса йурлакан чаплă сценăсен чуна кайса тивекен самантĕсем—„Дон Карлос" опĕрăна искусствăн мухтава тивĕç произведенийĕ туса хураççĕ. Бизе („Кармен" опĕрă авторĕ) стилĕне çырнă „Испания" произведенин пахалăхĕ Верди çырнă „Дон Карлос" опĕрăрах уçăмлăн сисĕнет.

1862 çулта Верди Росçийăна килнĕ. Петербургра унăн „Сила судьбы" йатлă опĕрине лартнă пулнă. Мускав урлă иртсе кайнă чухне те вăл хăйĕн „Трубадур" опĕрине итлесе тухнă.

Ватăлса çитсен те Верди хăйĕн ĕçне малалах туса пырать. 1871 çулта вăл „Аида" опĕрăна, 1874 çулта „Реквием", 1887 çулта „Отелло", вара йулашкинчен, 1892 çулта „Фальстаф" опĕрă çырать. Верди хăйĕн ĕçне пархатарлă тĕслĕхсемпе итоглать. Мен ĕçлеĕсемĕн маçтăрлăхне хăпартса пырать вăл, чĕлхене пуйанлатать, ĕлĕкрех çырнă произведенисене тепĕр хут пăхса тухать, йусать. „Аида"-ра вăл „пысăк опĕрăн" çĕнĕ варианте парать. Ку опĕрăри музыкă илемлĕхĕн çÿлĕлĕхĕ куракансене çав тери савăнтарать. Вырăнçусăр ытлашши сăмахсем опĕрăра çук. Çентерÿлĕ кĕрешĕве кăтартакан сценăсем калама çук вăйлă тухнă.

„Реквием" (Манцони поет вилсен, çавна асăнса çырнăскер) халăх ĕçĕшĕн кĕрешсе пуçĕсене хунă паттăрсем çине лартнă памятник вырăнĕнчи произведени пулса тăрать.

Чаплă композитăр Верди Милан хулинче 1901 çулти йанварĕн 27-мĕшĕнче вилнĕ. Хăй хыççăн унăн учениксем никамах та йулман. Анчах унăн творчестви пĕтĕм тĕнчери куљтурăра калама çук хакла вырăн йышăннă, нумай çĕршывсенчи халăхсен достойанийĕ пулса йулнă.

„Чăнлăха çынсем тунă пек тусассăн—начар мар, çав чăнлăха ху тусассăн—тата та лайăх вара, темиçе хут лайăх", тенĕ пĕррехинче Верди. Вăл чăн-чăн художĕствăлă чăнлăхăн генилĕ маçтăрĕ пулнă. Художĕствăлă чăнлăха вăл музыкă средствисемпе уса курса ахаљтен çеç çырса мар, çав чăнлăха куљтурлатса, çынсен чĕрисене вырнаçулă туса кăтартма тăрăшнă.

К. Кузнецов.

Йединоличниксен лашисем çине налог хурасси çинчен йышăннă саккуна вăхăтра пурнăçа кĕртмеле

Колхоз стройĕ йалăн сăн-сăпатне палламала мар улшăнтарчĕ. Ĕлĕк чухăн пулнă вунăшар, çĕршер пин хресченсем хăйсен ĕлĕкхи чухăн пурнăçне халĕ маннă, халĕ вĕсем пуйан та куљтурăлă пурăнаççĕ. Кулаксем клас пулса тăнине пĕтернĕ. Ĕлĕк кайа йулнă йал хут пĕлекен, куљтурăлă, социалисăмлă йал пулса тăчĕ. Пирĕн партипе Совет правительстви, халăхсен йуратнă çулпуçĕ Сталин йулташ пирĕн колхозсемшĕн, колхозниксемшĕн хытă тăрăшаççĕ.

Сталинла Конституци тата йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕ—колхоз стройне малалла çирĕплетсе ымали, социалисăмлă йалхуçалăхĕн економикине куљтурине малала аталантарса ымали çирĕп саккунсем.

Кулленех вуншар, çĕршер йединоличниксем, хăйсен кайа йулнă уйрăм хуçалăхĕсене ĕмĕрлĕхех пăрахса, колхоза кĕреççĕ. 1938 çулта йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 1-мĕшне çитиччен Чăваш республикинче çĕнĕрен 3.258 хуçалăх колхоза кĕнĕ. ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ йышăннă саккунсем колхоз йухăмне вăйлатма нумай пулăшрĕç. Мĕншĕн тесен, вăл саккунсем пĕтĕмпех Сталинла Конституцирен тухса тăраççĕ, вĕсем совет государствине малала çирĕплетме, колхоз стройне малала çирĕплетме пулăшакан саккунсем пулса тăраççĕ. ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ йышăннă саккунсене колхозниксем, ĕççыннисем пысăк хавасланхпа йышăнса илчĕç.

Канаш районĕнче çентабĕр уйăхĕнче 160 хуçалăх ытла колхоза кĕнĕ. Ку районри Карăклă йалсоветĕнче 47 хуçалăх, Вăрăмпуç йалсоветĕнче 30 хуçалăх колхоза кĕнĕ. Тутаркас районĕнче 150 хуçалăх ытла çĕнĕрен колхоза хутшăннă. Вăл районри Кĕçĕн Карач йалсоветĕнче 40 хуçалăх колхоза кĕнĕ. Сĕнтĕрпуç йалсоветĕнче (Сĕнтĕрвăрри р.) 31 хуçалăх колхоза кĕнĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр районсенче йединоличниксене колхоза кĕме пулăшас тĕлĕшпе нимех те тумаççĕ-ха. Кунта уйрăмăнах Вăрмарпа Çĕрпÿ районĕсене кăтартса хăвармала. Вăл районсенче колхоз йухăмне вăйлатассине питех те йапăх йĕркеленĕ.

Колхоза кĕмесĕр тăрса йулнă йединоличниксем нумайĕшĕ хăйсене уйăрса панă çĕр участкисем çинче тÿрĕ ĕçлесе пурăнас вырăнне, услам илес шутпа, спекуљацийне туртăнаççĕ. Ун пек хуçалăхсен спекуљаци туши (лавсемпе ĕçлесе çÿресси, совет саккунĕсене пăсса суту-илÿ тăвасси) тĕп тупăш пулса тăрать йалхуçалăхĕ вĕсемшĕн пулăшулă хуçалăх вырăнĕнче çеç тăрать. Ку вăл Сталинла Конституцине пăсни пулать. Сталинла Конституци йединоличник хресченсене хăйсен çĕрĕсене ĕçлесе пурăнма чармасть, анчах вăл хуçалăх чăн-чăн хăй ĕçĕпе пурăнакан хуçалăх пулмала.

Лаша тытакан йединоличниксем чылайĕшĕ тĕрлĕ ĕçсенче ĕçлесе нумай укçа-тенкĕ тупаççĕ. Тепĕр чухне вăл тупăш темиçе пиншер тенке çитет. Кĕçĕн Карач йалсоветĕнчи (Тутаркас р.) йединоличник М. Игнатйĕв ерех турттарса çулталăкра 7—8 пин тенкĕ тупать. Ст. Анудин тата П. Хрипăв йединоличниксем вăрман турттарса 5.000 тенкĕрен кайа мар ĕçлесе илеççĕ. Ку йалсоветри йединоличниксем 30 хуçалăх вăрман хуçалăхĕпе договăр туса ĕçлеççĕ, кашни 20 пин ĕçлесе илет. Кив Вăрмарта йединоличник Павлăв Александр 1938 çулта тĕрлĕ ĕçсенче лашапа ĕçлесе 11.996 тенкĕ илнĕ. Çак йалтах В. Макарăв—1.092 тенкĕ, И. Терентйĕв—946 тенкĕ, М. Новикăв—977 тенкĕ, Тимофейĕв—924 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Çав вăхăтрах ку йалта октăбĕрĕн 1-мĕшне çитсе те лаша тытакан йединоличниксенчен пĕри те пĕр пус налог тÿлемен.

Пирĕн республикăра лашалă йединоличник хуçалăхĕсем 21.787. Вĕсем çине 9.947.500 тенкĕ налог хунă. Октăбĕрĕн 1-мĕшне çак хисепрен налог укçине мĕн пурĕ те 35 пин тенкĕ çеç пухнă-ха.

Чылай районсенче, сăмахран: Ĕлĕк, Çĕмĕрле, Трак, Шăмăршă, Йелчĕк районĕсенче налог укçине пĕр пус та пухман. Патăрйел, Йелчĕк, Ишлей, Ĕлĕк, Çĕмĕрле, Шупашкар, Пăрачкав районĕсенче ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ йышăннă саккунсем çинчен ăнлантарса парас ĕçе йĕркелемен. Вăрмар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенче йединоличник лашисем çине налог хурасси çинчен йышăннă саккуна пăснисем пулнă. Мăн Алгашра (Çĕмĕрле р.) çак саккун тухиччен вилнĕ лаша çине те налог хунă. Чермĕш йалсоветĕнче (Сĕнтĕрвăрри р.) Корчагин йединоличник çине налог хунă. Анчах вăл лашине 1937 çултах сутнă. Пукаш йалсоветĕнче (Сĕнтĕрвăрри р.) П. Исайĕв йединоличник хăйĕн вата лашине çак çулхи çентабĕр уйăхĕнче кăна сутнă. Çапла пулин те финагент Казаков ăна пĕр лаша тăрăх анчах пелтерÿ панă.

Ĕлĕк районĕнчи Йаргуљкинă йалсоветĕнче 16 йединоличника пелтерÿсем вăхăтра паман. Йĕрке тăрăх пелтерÿсем çентабĕрĕн 20-мĕшĕнче памала пулнă, вĕсем çентабĕрĕн 25-мĕшĕнче тин салатнă.

Уйрăм колхозсенче хăшпĕр колхозниксем хăйсене ĕçлесе пурăнма лаша тытаççĕ. Вăл йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставне пăсни пулать. Енĕшпуç колхозĕнче (Вăрмар р.) виçĕ колхозник уйрăм лашасем тытаççĕ. Арапуçĕнче (çав районах) пĕр колхозникăн лаша пур. Кукашне йалсоветĕнче (Сĕнтĕрвăрри р.) пĕр колхозник лаша тытать. Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри район финпайĕсем çав лашасем çине налог хунă. Ку çитĕ тĕрĕс мар. Колхозниксен лашисене колхоза пĕрлештерес пулать.

Чылай çĕрте йалсоветсем йединоличник лашисем çине налог хурас ĕçе тивĕçлипе хак паманни палăрать. Буинск йалсовечĕн (Вăрнар р.) председателĕ П. Петров йединоличниксен лашисем çине хунă налога хăçан парса татмалли срука та пĕлмест.

Йединоличниксен лашисене шута илес ĕçе тĕплĕн туман пирки, хăшпĕр çĕрте лаша пурри çинчен каламасăр пытарса хăварнисем пулнă. Канаш районĕнче—2 лаша, Сĕнтĕрвăрри районĕнче—5 лаша, Чурачăк йалсоветĕнче (Çĕрпÿ р.) пĕр лаша пытарса хăварнă.

Çав çитменлĕхсене йалсоветсен, финанс агенчĕсен сывăх кунсенчех пĕтермеле.

Советсен тата ĕçтăвакан комитетсен ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1938 çулти апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановленине пурнăçа кĕртес пулать. Унта çапла каланă:

„Нацилĕ компартисен Тĕпкомсене, крайкомсене тата обкомсене, республикăсен Халăх Комиссарĕсен Совечĕсене, облăçтăвкомсемпе крайĕçтăвкомсене йединоличник тĕлĕшпе государствăна хирĕçле тата колхоза хирĕçле практикăна пĕтерме хушас тата налогсем, тештырă тăратас тата аш-какай тăратас т. ыт. тĕлĕшпе государства умĕнчи мĕн пур обйазательствăсене йединоличниксен хуçалăхĕсем тĕрĕс тултарнине çирĕп асăрхаттарма хушас".

Йединоличник лашисем çине налог хурасси çинчен йышăннă саккун тавра йалсоветсен массăлă ĕçе анлăн сармала. Октăбĕрĕн 15-мĕш тĕлне йединоличниксен лашисем çине хунă налог укçине пур йединоличниксен те тÿлесе татмала. Çакна колхозниксен масси ыйтать, ăна ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ йышăннă саккун ыйтать. Пирĕн Советсен Сталинла Конституцирен тухакан совет саккунĕсен авторитетне çÿлте тытмала.

В. Соколов.

Çитĕннисен шкулĕсем

Кăçалхи çул республикăри пур районсенче те пекех çитĕннисене вĕрентме туллимар вăтам шкулсем уçăлнă. Хăшпĕр районсенче çитĕннисене вĕрентме вăтам шкулсем те уçăлнă.

Тăвай районĕнчи çутĕç пайĕ çитĕннисене вĕрентме икĕ çĕрте туллимар вăтам шкулсем уçать: Тăвайĕнче тата Йенĕш-Нăрвашра. Занйатисем ку шкулсенче каçхине пулаççĕ.

Халĕ вĕренме кĕрес текенсенчен зайавленисем илеççĕ. Вĕренес текенсен йышĕ пысăк. Октăбĕрĕн 10—14 мĕшĕсенче испытанисем пулса иртеççĕ.



— Кам калаț епĕр Франкона пулăшатпăр тесе? Епĕр хамăрăн нимĕç салтаксене çеç пулăшса тăратпăр.

А. Грунин ӳкерчĕкĕ („Пресскляше“).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Цзўцзйан—Ханькоу линийĕ çинче вайлă çапăçусем Сингочжоу районĕнче пыраççĕ. вăл Йапони наступленин тĕп вырăнĕ пулса тăнă. Йулăшки вунă кун хушшинче йапонецсем кашни кунах Йансиң йуханшывĕ урлă каçма хăтланаççĕ, анчах та Китай артиллерийĕ кашнинчех вĕсен хăтланăвĕсене аркатса тăкнă. Йапонецсем пысăк çухату ем тӳсеççĕ. Йапонин пĕр полкне пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă. Йапони командованийĕ ку участка çиве, Жуйчан—Унин шоççе çулĕ çинчи участкăран çарсем илсе, васкавлăн çĕнĕ подкреплениосем йараț. Çак участкăра та китайецсем йапонецсен мĕнпур атакиссне сирсе йарса, вĕсене хытă çĕмĕрнĕ. Йапонецсем йенчен 200 çынна йахăн пĕтнĕ.

Лучжоу—Сиңйан шоççе çулĕ çинче пысăк çапăçусем Сиңйанран хĕвелтухăçнерех пыраççĕ. Шанчан районĕнче хытă çапăçнă хыççăн йапонецсем Китайăн Хуантулири позицисене йышăннă. Çапăçура йапонецсем каллех вĕлерекен газсемпе усă курнă.

(ТАСС).

Францире парламента салатса йарассишĕн пыракан кампани

ПАРИЖ, октабĕрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Францири чылай хаçатсем, вăл шутрах „Эр Нувель“ хаçат та парламента салатса йарас тĕлĕшпе кампани туса пыраççĕ. Де Кериллис сăмахĕсем тăрăх, çав кампанийе премйер-министр Даладйе йертсе пыраț. Де Кериллис „Элок“ хаçатра çапла çыраț: Францире халĕхи вăхăтра пĕтĕмĕшлĕ суйлавсене туни вырăнлă мар, мĕншĕн тесен Франци çĕршывĕнчи политикăлă кĕрешӳ фашисла Германине çĕнĕ авантюрăсем тума çеç пулăшаț.

„Юманите“ хаçат Жак Дӳкло статйине пичетлесе кăларнă „Министрсен Совечĕн председателĕ,— тесе çыраț Дӳкло,—хăйне шантаж çулĕ çине тама ирĕк панă. Вăл депутатсен палатине салатса йарассишĕн тăраț. Анчах пирĕн суйлавсенче компартипе социалисла партин пĕтĕм кандидачĕсене тăратма сĕннине халăх фрончĕшĕн тăракансем пурте йышăннă. Çакăн пек прийом çак мĕнпур хăрушлăхсене чарса лартмала тăваț“.

Блюм „Попюлер“ хаçатра çапла çыраț: депутатсен палатине салатса йарасси палатăн ытларахăш пайĕн раскол-мĕн пулсан кăна кирлĕ пулнă пулĕччĕ. Çак кампанийе социалисла партине хирĕçле блок тăвас шутпа туса пыраççĕ пулсан, социалисла парти пĕтĕмĕшлĕ кандидатсене тăратасси çинчен коммунистсем панă сĕнĕве тĕпленрех пăхса тухĕ. Блюм компарти сĕнĕвне вĕсем халăх фрончĕшĕн тăма пулнине пĕлтернĕ пур республиканецсем хушшинче те сарма хушаț.

Çамрăк рабочисене хакламаççĕ

Кăçал, Çĕмĕрле комбиначĕ çумĕнчи хапрăк-савăт шкулĕнчен 63 ача вĕренсе тухса производствăна ĕçлеме кусрĕç. Вĕсенчен чылайĕшĕ отличнă паллăсемпе вĕреннĕ. Производствăра ĕçлес хастарлăх вĕсен çав тери пысăк. Анчах комбинатри цех начальникĕсем йĕпле усă кураççĕ-ха кăçал вĕренсе тухнă ачасемпе? Хăшпĕр цех начальникĕсем квалификациллĕ рабочине хакламасăр вĕсене ăçта кирлĕ унта ĕçлеме йараççĕ. Урапа цехĕн начальникĕ Радайкин й. шкултан вĕренсе тухнисенчен чылайĕшне подсобнăй рабочи вырăнĕнче йе тата урăх çĕрте ĕçлеттерет. Акă сăмахран, Гладков, Борцов йулташсем шкултан „хорошо“ паллăпа вĕренсе тухрĕç, производствă йĕркине лайăх пĕлеççĕ. Производствăлă практикă вăхăтĕнче те нормăна ытлашшипех тултарса ĕçленĕ. Анчах Радайкин вĕсене пайан кун та станокпа ĕçлеме йаман, пĕр çĕртен тепĕр çĕре çеç куçараț.

Шкултан вĕренсе тухнисем комсомол 20 çул тултарнине ĕçре те, вĕренӳре те паха çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме обйазательствăсем илнĕ. Анчах вăл обйазательствăсем чылайĕшин пурнăçа кĕмеççĕ. Айăпĕ кунта пĕтĕмпех урапа цехĕн начальникĕ çине тивет.

Н. Косăв.

Урапа цехĕнчи рабочи.

Китайăн Уйрăм районĕнче

Йапонине хирĕç пĕрлĕхлĕ фронт тăвас тĕлĕшпе Гоминданпа Китайри коммунисла парти килĕшӳ тунă хыççăн, 1937 çулта, Китайăн совет районĕсене Китай реслубликĕн Уйрăм районĕ туса хунă. Ку район пысăк территори йышăнаț, вăл Шаньси, Ганьсу, Нинçа тата Суййуань провинцисен пайĕсенчен пулса тăраț. Пĕтĕм уйрăм район 20 уйезда уйăралаț.

Ку районри пурнăç çине, паллах, Йевропăри буржуази тата фашисла пичет те тимлĕн çаврăнса пăхаççĕ. Чылай хаçатсенче тата журналсенче уйрăм районран çырнă корреспонденцисене курма пулаț.

Англири либераллă журнал „Уорлд Ньюс энд Вьюс“ çапла çыраț: уйрăм районра пурăнакан халăхсене ĕлĕк феодалсемпе ростовщиксем нимĕн хĕрхенмесĕр експлоатациленĕ. Хресченсен нумайĕш пайĕ çĕр çуккипе асапланса пурăннă. Уйсене шăвармали çистема йĕркерен тухнă пирки, района час-часах шыв илнĕ тата час-часах тырă пулман. Выçлăх пулнă.

Халĕ районри хресченсене çĕр панă. Уйсене шăвармали çистемăна лайăхлатнă. Йалхуçалăхне лайăхлатма майсем паракан ĕçсем туса ирттернĕ. Тырпул тухăçĕ чылай хăпарнă.

Культура йенчен, — çыраț малала журнал,—ку район питĕ те кайа йулнă пулнă. Мĕн пур халăхран çырăва пĕлменнисем 95 процент шутланнă. Хальхи вăхăтра районра мĕн пур ачасенчен 50 проценчĕ шкулсенче вĕренеççĕ, çитĕннисене вĕрентме шкулсем организациленĕ, политикă кружокĕсем, хорпа драмă тата ытти кружоксем ĕçлеççĕ, кашни кунах хаçат пичетленсе тухса тăраț.

18 çула çитнĕ çынсене пурне те, пурлăхне, национальнăçне, мĕнле тĕн тытнине, партилĕхне тата вĕреннине пăхмасăр, управлени оргăнĕсене суйлама тата суйланма права панă.

Малала журнал Уйрăм районра пурăнакан халăх Китайри коммунисла партине тата Гоминдана Йапони вăрă-хурахĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе вăйлăн пулăшнине кăтартса çыраț.

8-мĕш çар Йапони çарĕсене хирĕç çапăçма фронта тухса кайнă хыççăн, районри саккунлăха тата йĕркене сыхласси ирĕклĕ организацисен аллине—„Çамрăк гварди“ тата „Йапонине хирĕçле самооборонă çарĕ“ корпу ĕçене куçнă.

Уйрăм район столици Йаньань—Китайăн пысăк центрĕ пулса пыраț. Ку хулара: Йапонине хирĕçле политикăлă-çар академи, университет, Китайри коммунисла партин партшкулĕ, театр училищи, тĕрлĕрен курссем тата нумай вăтам шкулсем пур. Кунсăр пуçне тата библиотекă, рабочисен клубĕ тата ытти культурăлă учрежденисем пур.

Журнал кăтарнă тăрăх, Йаньань—Йапонине хирĕçле политикăлă-çар кадрĕсене вĕрентес ĕçĕн центрĕ пулса тăраț. Сăмахран, Йапонине хирĕçле политикăлă çар академи (1937 çулта уçăлнăскер) командирсемпе политработниксене пурĕ 5 пин çын вĕрентсе кăларнă, халхи вăхăтра вĕсем пурте фронтсенче çапăçаççĕ.

Китайăн Уйрăм районĕнче ларутăру кашни кунах лайăхланса пынине фашисла пичет те паллă тумасăр хăварма пултараймаț. Çапла, „Нейе цюрхер цейтунг“ йатлă фашисла хаçат Уйрăм районри руководителĕсем тата вырăнсенчи влаçсен руководителĕсем нумайĕшĕсем хресчен ем хушшинчен тухнисем пулса тăни çинчен çыраț. Кунта хăйĕн вăйĕпе çĕр ĕçлеме пултараканă кашнинех çĕр параççĕ.

Уйрăм район столици—Йаньань хули çинчен çырса, корреспондент хулара пурăнакан халăх йышĕ питĕ те кĕске вăхăт хушшинчех вăйлăн ӳснĕ, хула сăн-пичĕ Китайăн ытти хулисенчен чылай тасарах та тирпейлĕрех, тесе çыраț.

Уйрăмах корреспондент рабочисен клубĕпе пысăккăн интересленнĕ. Унăн сăмахĕсем тăрăх, клуба кĕрес çĕрте икĕ йалав вĕлкĕшсе тăраççĕ: Уйрăм районăн çурлапа мăлатуклă йалавĕ тата Гоминдан йалавĕ.

Хулара радиостанци пур. Ун урлă Уйрăм район фронтпа, Китайăн центрти правительствипе тата ытти мĕн пур тĕнчепе йаланах çыхăну тытса тăраț.

Н. Йакшин.

Праçник умĕнхи кунсенчи суту-илӳ

ССРС Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ праçник умĕнхи кунсенче суту-илӳ тумали йĕрке туса хатерленĕ. Промтаварсем, апат-çимĕçсем, йатарласах çăкăр булкă таврашсем сутма тунă магазинсем, столовăй таврашсем йаланхинчен икĕ сехет нумайрах сутă тума тивĕç. Çакăн пек нумайрах вăхăт ĕçлемели срука çапла палăртса çирĕплетнĕ: промтавар магазинĕсем октабĕрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа нойабĕрĕн 6-мĕшчен çавăн пек ĕçлемеле, апат-çимĕç сутакан магазинсем, ресторансем, столовăйсем, кафесем — октабĕрĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа нойабĕрĕн 6-мĕшчен, йатарласах çăкăр-булкă сутакан магазинсем — нойабĕрĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа 6-мĕшне çитиччен.

Нойабĕрĕн 7-мĕшĕнче апат-çимĕç магазинĕсемпе столовăй таврашĕсем ĕçлеççĕ. Вăл кун хăш сехетсенче суту-илӳ тумалине ырăнти оргăнсем палăртса çирĕплетеççĕ. Нойабĕрĕн 8-мĕшĕнче магазинсемпе столовăй таврашĕсем йаланхи кунсенчи пекех ĕçлеме пуçлаççĕ.

(ТАСС).

Пысăк тупăшсем

Пăрачкав районĕнчи „Большевик“ колхозра кăçалхи çул черепицă тата кирпĕч производствисене вăйлăн сарса йанă.

Виççĕмĕш кварталта черепицă тата кирпĕч нумай туса кăларнипе, колхоз пысăк тупăшсем илнĕ: кирпĕч производстви колхоза 32 500 тенкĕ, черепицă производстви 7 500 тенкĕ тупăш панă.

Халь колхозниксене ĕçкунĕ пуçне авансла 40 шер пус валеçсе панă. Кирпĕч производствинче ĕçлекен Н. А. Колотушкин аванс шучĕпе 232 тенкĕ илнĕ.

Веденин.

Колхозра парк тăваççĕ

Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ Степан Йакăвлевич Йакăвлĕв йулташ председатель пулса ĕçлекен „Звезда“ колхозра (Сентĕрвăрри р.) çитес çул культурăпа кану паркĕ уçаççĕ. Паркра сад тума халĕ тĕрлĕрен улмуççисем, чăрăш, çака, вĕрене йăвăççисем кӳрсе килнĕ.

Иртнĕ уйăхра колхозра дранкă çурмали производствă уçнă. Двигатель пĕр сменăра 20 пин дранкă çурса кăлараț. Халĕ колхозăн пĕрлешӳлĕ витисене пурне те дранкăпа витсе тухнă.

Н. Волкăв.

Кашни жалăбăна тĕплĕн пăхса тухмала

Рабочисемпе колхозниксем тата служăшчисем хăйсен чĕрисене ыраттаракан ыйтусем тăрăх республикăри халăх комиссариачĕсемпе тĕп учрежденисене жалăбăсем нумай çыраççĕ, вĕсем тăрăх хăйсене кирлĕ татăклă ответсем кĕтеççĕ.

Кашни жалăбăна вăхăтра тата тивĕçлипе пăхса тухмала. Апла пулин те республикăри хăшпĕр халăх комиссариачĕсемпе учрежденисем тата вĕсенче ĕçлекен уйрăм работниксем жалăбăсем çине тимлĕн пăхмаççĕ, ĕçе çиелтен çеç тăваççĕ, çитменнине тата жалăбăсене çухатаççĕ. Ку тĕлĕшпе Чăваш республикĕнчи прокуратурă уйрăмах „паллă вырăнта“ тăраț.

„Чăваш Коммунĕ“ редакцийĕ 1937 çулти август уйăхĕнчех ЧАССР прокуратурине „Йулташ редактăр“ тата „Саккун пур-ши?“ йатлă заметкăсене тĕрĕслеме йанăччĕ. Çак жалăбăсем пирки редакци темиçе хутчен те астутарчĕ. Кайран:

— Пирĕн пата ун пек жалăбăсем килмен,—терĕ прокурор Максимăв йулташ.

Тĕрĕс мар. Вăл жалăбăсене халиччен ĕçленĕ Константинăв алă пуссах илнĕ. Константинăв хăй ĕçрен тухса кайнă чух вăл жалăбăсене никама та парса хăварман, çухатнă.

Пайанхи куна „Чăваш Коммунĕ“ хаçат редакцийĕ ЧАССР прокуратурине 22 заметкă панă, вăл хисепрен 13 заметки 1937 çултанпа выртаççĕ.

Жалăбăсемпе тивĕçлĕ ĕçлеменни тепри вăл—Çĕрĕç халăх комиссариачĕ. Кунта 18 жалăбăран 9-шĕ пĕлтĕрхисем.

— Халь жалăбăсене „выверкă“ тăватпăр, — теççĕ йаланах унти Аванскийпе Дашков йулташсем.

Мартăн 25-мĕшĕнче Çĕрĕç халăх комиссариатне „Колхоз хуçалăхне йухăнтаракан текен жалăбăна пайан кун та çителĕклĕ тĕрĕслемеççĕ“ йатлă „Пионер“ колхоз çинчен „И“ йалкор çырнă заметкă кĕнĕ. Çапах та результачĕ пайанхи куна та паллă мар.

Жалăбăсемпе районри организацисем те тивĕçлипе ĕçлемеççĕ. 1937 çулти нойабĕрĕн 5-мĕшĕнче ПСК(б)П Хĕрлĕ Чутай райкомне йалкорăн „Кам вăл Смирнов“ йатлă заметки кĕнĕ. Çак заметкăна тĕрĕслесе, итогне май уйăхĕнче йарса паратпăр, тесе шантарчĕç райкомри йулташсем, унтанпа 4 уйăх иртрĕ, çапах нимĕрле результат та çук.

Вăрмарпа Вăрнар районĕсенчи çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем те жалăбăсем çине çавăн йеверлех пăхаççĕ. Вăрмар районĕнчи çĕрĕç пайĕнче йалкорсен „Вредител пурах“, „Йăва çаврăнчĕç“ йатлă заметкисем 8—9 уйăх ĕнтĕ тĕрĕсленмесĕр выртаççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Профинтерн“ колхоз ĕçне майăн 7-мĕшĕнче тĕрĕслесе пĕтерне хыççăн, материалсем тăрăх айăплисене тивĕçлĕ ответ тыттарма Хĕрлĕ Чутай районĕнчи милици тытăмне пĕлтернĕ, унтанпа результатне ыйтса темиçе хут та астутарнă, çапах та нимĕн сасчĕвĕ те çук.

Тури-Макаç колхоз кладовщикĕ Иванов Степан çинчен çырнă заметкăна тĕрĕслесе, çитменлĕхсене вырăнта пĕтерме Сĕнтĕрвăрри районĕнчи çĕрĕç пайĕ йанăччĕ. Çакна Шуршăл участокĕнчи зоотехник Громăв йулташ тĕплĕн тĕрĕслемесĕрех „Авт...“ колхоз председателне курайманран çыраț. Жалăбăна кам çырни паллă мар, алă пусман“, тесе пĕлтерет. Автăрăн хушамачĕпе адресĕ Громов йулташа мĕн тума кирлĕ пулнă-ши вара? Йе вăл корреспондентăн чăн заметкипе унăн ыйтăвне шаматне никама та кăтартмалла маррине, пĕлтермеле маррине, ...шăн айăплисене УК 96 тата 12... статйисемпе ответ тыттарма пĕлмест-ши вара?

Хăшпĕр организацисем ĕççыннисен жалăбисем тăрăх суйса ответлеççĕ. Акă, Вăрнар районĕнчи Чалăм Кăкшăмри Йакăвлĕв йулташ КОГИЗ ран çыранса илнĕ кĕнекесене 10 уйăх хушшинче те илменни çинчен пирĕн редакцие жалăба çырнăччĕ. Çав жалăба тăрăх КОГИЗ ран: Йакăвлĕв йулташа укçана августăн 10-мĕшĕнче кайала таварса патăмăр, тесе пĕлтерчĕç. Анчах çакна КОГИЗ ытти тĕмпех суйса пĕлтернĕ, Йакăвлĕв йулташа халĕ те укçа таварса паман.

Çавăн пекех тата ПСÇЛ... Вăрмар райкомĕ те Григорйев йулташăн „Йĕркелĕх пĕтсе ланă çĕрте“ йатлă заметкине тĕрĕслемесĕрех суйа ответ панă. Заметкăна иккĕмĕш хут тĕрĕслеме тиврĕ. Ĕçйалкорсен заметкисене тĕплĕн тĕрĕслеменни вăл—ĕçйалкорсен ĕçне пӳлсе хунийех пулаț.

Хăшпĕр организацисем тата йалкорсен заметкисене тĕрĕсленĕ хыççăн фактсем тĕрĕс пулсан а нимĕнле мерă та йышăнмаççĕ. „Радио“ колхозри çитменлĕхсем çинчен çырнине Хĕрлĕ Чутай районĕнчи çĕрĕç пайĕ тĕрĕсленĕ хыççăн заметкăри фактсем пурте тĕрĕс пулнă. Анчах çав заметкăра кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерессипе мĕн туни паллă мар.

Ĕççыннисен жалăбисем çине формальнă-бӳрократла пăхас йалана пăрахмала. Кашни жалăбăна вăхăтра, тĕплĕн тĕрĕслесе, татăклă ответ памала. Ĕççыннисен жалăбисем çине çиелтен, формальнă-бӳрократла пăхни—вăл сăтăрлă ĕç тунинчен пĕрттеărасна мар. Çакна пурин те асрах тытмалла. Кашни жалăбăна учреждени руководителĕсен хăйсен тĕплĕн пăхса тухса, ыйтăва тĕрĕс татса памалла.

И. Сидоркин.

Пăхса вĕренмели пособисем

Заньатисенче пăхса вĕренмели йапаласемпе (наглядные пособия) усă курни вĕренекенсене темăна лайăх ăнланса илме пулăшаț. Çĕрпӳ районĕнчи çутĕç пайĕ районри вăтам тата туллимар вăтам шкулсем валли 11 пин тенкĕлĕх пăхса вĕренмели йапаласем илсе панă: електромоторсем, двигателсен моделĕсем, Паскаль приборĕсем, Архимед витрисем, гербарисем, картăсем, зоологи альбомĕсем тата ытти те.

Вăл йапаласене—Çĕрпӳри шкул, Иванăвăри, Шуртавашри, Тăвашкассинчи туллимар вăтам шкулсем, Чурачăкри вăтам шкул илнĕ.

Г. Шумилăв.

Канăç прави

Канăç прави совет халăхĕн аслă прависенчен пĕри. Канмалли çуртсенче, курортсенче канакансен, айакри ек курçисене кайакансен хисепĕ çулран çул ӳссе пыраț.

Канашри вакунсем йусакан сăватри профсоюз организацийĕ кăçалхи 9 уйăх хушшинче Союзри санаторисене тата курортсене пурĕ 304 çынна йанă. Вĕсенчен вунайĕшĕсем стахановецсем.

Халĕ Октабĕр уйăвĕ умĕнхи ăмăртура мала тухакансене курорта йама тата 11 путовкă илсе хунă.

Н. В.

Хроника

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Иван Васильевич Депутатăв йулташа Чăвашстройтрест управляющийĕ пулма çирĕплетнĕ.

Ответлă редактăр заместителĕ В. ЙАКĂВЛЕВ.

„РОССНАБСБЫТĂН“ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ УЙРĂМĔ

економист-финансист, економист-статистик

ТАТА

ученик-статистик

ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ.

2—1

Ачасен театрĕн спектаклĕ

Ыран, октабĕрĕн 11-мĕшĕнче, Чăвашсен ачасен театрĕ Потомкин çырнă „Ружье Кима“ йатлă пйесăна вырăсла лартаț. Постановкă режиссорĕ—В. С. Петров. Ку пйесăна ачасен театрĕ октабĕрĕн 12-мĕшĕнче те выляса параț.

Ачасен театрĕ вырнаçса тăрахчен Пионерсен çурт не йусаса пĕтерейменни пирки, постановкăсем Строителсен клубĕнче пулаççĕ.

ШУПАШКАРТИ

Ленин йачĕпе тăракан ертеле

строительствăра ĕçлеме плотниксем, хĕрарăмсемпе арçынсем валли çиелтен тăхăнмалли тумтирсем çĕлекен çĕвĕçсем

КИРЛĔ.

Адрĕç: г. Чебоксары, Красная площадь магазин Промкооторга, верхний этаж, ход со двора.

ПРАВЛЕНИ.

3—2

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи çулйер управленийе

бухгалтĕр-ревизор-инспектăр

тата

чертежницă кирлĕ.

Çак адрĕспе йытса пĕлмеле: Дорожное Управление при СНК ЧАССР (гор. Чебоксары, ул. 15 лет комсомола, дом №2).

2—1

Колхоз театрĕ çĕнĕ çезонра

Çĕнрелре (Тутар республикĕ) колхоз театрĕ уçăлнăранпа пĕр çул иртрĕ. Ку театр Çĕнрел районĕнче çеç мар, Тутар республикĕнчи чăваш йалĕсем пур Буденнăй, Тетĕш, Пăва, Октабĕр, Аксу т. ыт. районсенче те постановкăсем параț. Тутар республикĕнче чăваш театрĕ уçăлни пур чăваш йалĕсемшĕн те пысăк хавхалăх пулса тăчĕ. Пур йалсенче те театр спектакль лартнă кас клубсенче ватăсем те, çамрăксем те питĕ нумай пухăнаççĕ.

Иртнĕ çезонра театрăн репертуарĕнче спектакльсем йышлах марччĕ. Пĕр çул хушшинче Павлăвăн „Йалта“, Гоголен „Авлану“ пйесисене, Чехавăн „Предложение“ тата çавăн пек пĕчĕк водевилсем („Çӳпçипе хупăхчи“, „Тел пулни“) лартнă. Кăçалхи çезонра театр хăйĕн репертуарĕнче пысăк пйесăсемех палăртнă („Айдар“, „Мои мать“, „Ким пăшалĕ“ т. ыт. те).

Çĕнĕ çезон пуçланчĕ. Халĕ театр „Айдар“ пйесăпа йалсене тухрĕ. Куракансем спектакле юрлаççĕ. Ку ĕнтĕ, паллах, артистсен пултарулăхĕ ӳссе пыни çинчен калаț.

Уйрăмах Сентийер ролĕнче выляканПавлăв артиста палăртмала. Вăл сценă çинче выляма пуçлани иккĕмĕш çул кăна-ха. Павлăв çитĕнет. Тĕрлĕ ролĕсе вылямассерен вăл палăрмалах улшăну, ӳсĕм тăваț. Çĕнĕрен çĕнĕ, ĕненмеле образсем параț. Сентийер ролне чăн чăн искусствăна парăнса чĕререн выляț. Сентийер (Павлăв) сценă çине тухсассăнах куракансен пĕтĕм интересĕ ун çине куçаț. Сентийер йăвăрлăха, асаплăха кĕрсе ӳксен, куракансем ăна хĕрхенеççĕ. Куракансем çине пăхсан вĕсем пурте Сентийере пулăшмашкăн хатĕр тăнине туйатăн. Мĕншĕн тесен, Сентийерĕн кала çăвне, тарăхăвне, хăтланăшне Павлăв ĕненмеле выляса параț.

Никитин та Айдар ролне лайăх ăнланса выляț. Айдарăн кăмăлне, мăнкăмăллăхне аван кăлараț. Куракансем халăха пусмăрлакан Айдара курайманлăхпа тăвăлса лараççĕ. Йакăвлĕвă та Пинерпи ролне ĕнентермеле, тĕрĕс выляț.

Пинерпийе йуратнă Сентийерĕнчен уйăрса Айдара качча параççĕ. Айдар Пинерпирен: „Ку кам?“ тесе Сентийер çине тĕллесе кăтартсан, Пинерпи уççăнах: „Вăл манăн савни“, тесе тăвăрăт. Çак вăхăтра куракансем вăл çупса йараççĕ. Картинăсем курăнса пынă çемен курса ларакансем темиçе çĕрте алă çупаççĕ Пинерпипе Сентийере уйăрасшăн мар. Ку ĕнтĕ Пинерпипе Сентийер ролĕсенче вылякансем ĕненмеле тата ăсталах парăнса выляннăран çапла пулса тăраț.

Пинерпи хĕр йурри йураț. Хурлăхлă! Савăнăçсăр уйăраççĕ. Çак вăхăтра курса ларакан колхоз хĕрĕсем сценă çине пăхса тăнă çĕртех кăмăлсăрланчĕç. Пинерпийĕн хуйхине тӳрĕс вĕсем Саман! Иртнĕ мăхавлă самана! Йепле вăл çамрăксен телейне туртса илнĕ.

Ку спектакле курса ватă колхозниксемпе колхозницăсем те питĕ хумханаççĕ.

— Питĕ тĕрĕс кăтартаț ĕлĕкхи пурнăçа,—теççĕ вĕсем —Акă, Хурăнвар кулакĕ Митрахван хĕрĕ урлă каçнă пуçĕпе вунçичĕ çулхи хĕре ирĕксĕрлесе хăй арăмĕ тунă. Вăл çирĕм икĕ çул кайала çеç-ха. Кун пеккисем пирĕн таврара сахал мар пулнă.

„Айдар“ пйесă куракансене питĕ те килĕшет. Вылякансенчен туйапуçĕ ролне выляканМ. Йакăвлĕв анчах ĕненчĕксĕр выльарĕ. Килĕшӳсĕр хăтланаț, халиччен никсăн никам калаçман сасăпа нăйкăшса саламаликкĕм калаț. Пĕр кирлĕ мар çĕртех тăса-тăса калаçаț тата темле сĕмсĕрленнĕ чухнехи пек тархаслвнса пăркаланаț. Туй пуçĕ ролĕнче выляса Йакăвлĕв куракансене кулăтарасшăн пулас. Кун та шӳт тума хăтланни ытла та ырнаçусăр. Çине тăрса выльани кирлĕ.

Йулашкинчен çакна каламала Театр музыкă тĕлĕшĕпе питĕ чухăн. Пинерпи хĕр йурри йурланă чухне кăна пĕр вăхăт сĕрме купăс сасси илтĕнет. Урăх пĕрте çук.

Захар Иççан

„ЧĂВАШ КОММУНЕ“ СЫРАНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ ПĔР УПАХА 2 Т. 50 ПУС. 3 УПАХА 7 Т. 50 П. 6 УПАХА 15 Т. СУЛТАЛĂКА 30 ТЕНКĔ. ПОДПИСКАНА ÇЫХАНУ УПРАМĔСЕМ, ПИÇМОНОСЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 527

Гор. Чебоксары, типограф. № 1 НКместпрома ЧАССР. заказ № 7930. б. 58×84 п. л.